24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус

1941
ЯНВАРЬ
30
КĔҪНЕРНИКУН
24 (5739) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

КОЛХОЗРИ АГРОШКУЛСЕМ

Социализмлă çĕрĕçĕнче малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырасси — колхозниксем хушшинче агрономи наукине тĕплĕн вĕренес ĕçе организацилеме ыйтать. Вăйлă тырпул туса илес, йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас тесен, вăл ĕçе тĕплĕн пĕлни кирлĕ. Пĕлес тесен агротехникăна вĕренес пулать.

Вăйлă тырпул туса илесси, ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхĕ колхоз кадрĕсене вĕрентсе хатĕрленинчен, вĕсене малта пыракан агротехникăна вĕрентнинчен, стахановецсен опычĕсене вĕсем патне çитернинчен килет. Агротехникăна пурин те, рядовой колхозникрен — сухалакантан, акакантан, çурелекентен тытăнса, районри партипе совет активĕ патне çитичченех вĕренмелле.

Пирĕн республикăра халĕ колхозсенчи 334 стахановла шкулта 8.488 çын, 816 агрокружокра 14.087 çын вĕренеççĕ.

Малта пыракан колхозсенче агротехникăна вĕренес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Кунта колхоз руководителĕсем уншăн тăрăшаççĕ, çак ĕçпе колхозниксен массине интереслентерме, вĕренĕве чăннипех те йышлăн хутшăнтарма пĕлеççĕ.

Колхозри стахановла шкул — агротехникăна вĕренмелли çĕнĕ форма. Вăл çурални нумаях та пулмасть, анчах вăл пур районсенче те, чылай колхозсенче хăйне тивĕçлĕ вырăна йышăнса пырать. Чăн та ĕнтĕ, ун пек шкул кашни колхозрах пулмалла кирлĕ. Вăл теориллĕ ыйтусене вĕренме, çавăнпа пĕрлех колхоз производствинчи кулленхи ĕçри опытсемпе паллашма, вăйлă тухăçлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн ăнăçлăн кĕрешме хăнăхтарса пыма пулăшать. Халичченхи, иртнĕ çулхи вăхăтсенче иртнĕрнĕ агровĕренĕвĕн çитменлĕхĕсенчен пĕри çакă пулнă: агротехника, зоотехника çинчен теориллĕ калаçусем, лекцисем, докладсем иртнĕрнĕ. Колхозниксем вăл лекцисене итленĕ те—киле саланнă, кайран-малтан вăл ыйту патне тепĕр хут тавăрăнман. Итленĕ çĕнĕ шухăш тăрăх харпăрхăй колхозĕнче практикăллă ĕçсем туса ирттермен. Колхозри стахановла шкул çак çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пулăшать.

Стахановла шкулăн тепĕр паха енĕ — вăл вырăнти опыта вĕрентсе, сăнаса пыма, вăл опыта ыттисем хушшине сарма пулăшни. Кунта агрономсемпе, зоотехниксемпе, ветврачсемпе, МТС старший техникĕсемпе пĕрлех колхоз производствинче малта пыракан çынсем, социализмлă çĕрĕçĕнчи новаторсем — стахановецсем хăйсен ĕçĕсем, опычĕсем çинчен лекцисем туса паракаçĕ. Ку вăл калама çук паха ĕç.

Лайăх ĕçлекен колхозри стахановецсен шкулĕнче çак асăннă ĕçсене пĕтĕмпех курма пулать. Ку тĕлĕшпе Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри стахановла шкул лайăх пример пулса тăрать.

Ку колхозра стахановла агрошкулта 32 çын вĕренет. Занятисем эрнере пĕрре пулса иртеççĕ. Ку тариннчен пурĕ 10 заняти иртternĕ. Кунсăр пуçне кашни бригадăра агрокружок пур. Кружоксем пурĕ — 13, вĕсенче 255 çын вĕренет. Занятисем кружоксенче те вуншар иртternĕ.

Вĕренĕве вĕсем практикăллă ĕçсемпе çыхăнтараççĕ. Шкулта, кружокра вĕренекен колхозниксем алăпа 135 центнер вăрлăх сортласа хунă. Уйра 184 гектар çинче юр тытнă. Кунсăр пуçне тислĕк, торф кăларнă т. ыт. те. Çак ĕçсене пĕтĕмпех вĕренӳпе çыхăнтарса тунă.

Малтанхи вăхăтра ун пек йĕркеллĕ ĕçлекен шкулсем пирĕн республикăра пĕрĕрĕн кăна шутланатчĕç пулсан, халĕ вĕсем йышлă.

Чăваш АССР Наркомземĕн агрономĕ Никитин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, акă, Чкаловский районра халĕ стахановла шкулсем 18 шутланаççĕ. «Ленин çулĕпе» колхозра стахановла шкула иртнĕ çулта организациленĕ. Кунта занятисем эрнере пĕрре пулаççĕ, занятисем виçĕ сехет пырать. Шкул план тăрăх ĕçлет. Шкула пурĕ 28 çын çӳрет. Шкул руководителĕ — агроном Крысин лекцине лайăх хатĕрленсе пырать, вăл пысăк теориллĕ ыйтусем çинченех ăнланмалла, лайăх каласа парать. Ăна колхозниксем юратаççĕ, занятисенче ăна хаваласнах итлеççĕ.

— Пĕрер çул унпа çакăн пек вĕренсен, агротехникăна агроном чухлех пĕлсе çитме пулнă, — тет колхозник Сергей Захаров.

Агрошкулсен ĕçĕпе ялхуçалăхĕнчи нумай специалистсем çивĕччĕн интересленеççĕ. Интересленеççĕ çеç мар, активлă специалистсем вăл ĕçе хăйсен пуçарăвĕпе хутшăнаççĕ, агрозоотехника вĕренĕвĕн организаторĕсем пулса тăраççĕ. Тăвай районĕнчи зоотехник Илларионов юлташ «Хĕрлĕ Çар» колхозра фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе конюхсем валли зоотехникăна вĕренмелли стахановла шкул иккĕ тунă. Кашни шкулта çирĕм-шер çын. Халĕ ку тариннчен çак шкулсенче вăл икшер хут занятисем туса ирттернĕ.

Иккассинчи (Шупашкар р.) «Майăн 1-мĕш» колхозра агровĕренӳ ĕçне агроном С. Григорьев юлташ йĕркелесе пырать. Вăл пуçарса ĕçленипе ку тариннчен 6 заняти пулнă. Кунта çакăн пек паха опыт пур: агротехникăна вĕренме пухăнсан, заняти пуçланас умĕн колхозниксене тĕнчери лару-тăрупа кĕскен паллаштараççĕ. Çакăн пек туни колхозниксене питех те кăмăла кайать. Çавăнпа та колхозниксем вĕренме пысăк хаваслăхпа çӳреççĕ.

Нумай колхозсенче агрокружоксем тунă. Чылайăшĕ вĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Акă, Элĕк районĕнчи Мăн Выльăри «Красная заря» колхозри агрокружока илер. Кружок ку тариннчен 4 заняти ирттернĕ. Кружока 24 çын çырăннă: бригадирсем, звеноводсем т. ыт. те. Анчах занятисене колхозниксем унчухлĕ çеç мар, яланах çирĕм пиллĕк çынран ытла пыраççĕ. Январĕн 6-мĕшĕнче пулнă занятинче 40 çын пулнă. Унта Кольцовкăри (Вăрнар р.) Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз председателĕ Коротков юлташ 1940 çулта хăйсен колхозĕнче вăйлă тырпул туса илни çинчен тунă доклада вуласа панă. Колхозниксем ăна пит тимлĕн итленĕ.

Çавăн пекех Ишлей районĕнчи Салапайкассинчи «Агроном» колхозри агрошкул та аван ĕçлет. Кружока коммунист Петр Гаврилов юлташ ертсе пырать. Кружокра 32 çын. Пурĕ 8 заняти пулнă. Çак тĕслĕхсем вĕсем пур колхозсене те сарăлма тивĕçлĕ тĕслĕхсем.

Анчах агротехникăна вĕренес ĕçе пур колхозсенче те мар кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшаççĕ-ха. Уйрăм колхоз руководителĕсем, чăрманас мар, тесе вăл ĕçе юриех манса хăварма тăрăшаççĕ.

Шăхасан районĕнчи «Березовка» колхозра агротехникăна вĕренес ĕçе ку тарана çитсе те организацилемен. Ялта вăтам шкул пур. Учительсем 20 çын ытла. Вăй çителĕклĕ, ĕçе пуçарса яни çеç кирлĕ.

Чкаловский районри «Октябрь ялавĕ» колхозра та (председателĕ Тихонов юлташ) агротехникăна вĕренме тытăнман. Ку ĕçе организацилеме Тихонов юлташа хăйне хушнă пулнă. Вăл, темшĕн, халĕ те ку ĕçе тытăнмасăр тăрать.

Колхозниксем агротехникăна вĕренесшĕн, вăл ĕçпе интересленеççĕ. Колхоз руководителĕсен задачи — колхозниксене вĕренме пулăшасси, çак ĕçе организацилесси пулать. Паллах ĕнтĕ, ялхуçалăх специалисчĕсен ку тĕлĕшпе пуçарса ĕçлени кирлĕ.

Партипе совет организацисен, çĕрĕç органĕсен уйрăм колхозсенче агротехникăна вĕренессине хакламаннине хирĕç вăйлăн кĕрешес пулать. Çакна ăнланса илме вăхăт: колхозниксене агротехникăна массăллăн вĕрентмесĕр гата районри партипе совет активĕ çине тăрса вĕренмесĕр, хальхи вăхăтра колхоз производстви не ертсе пыма вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе организацилеме йывăр. Çакна Сĕнтĕр районĕнчи руководительсен уйрăмăнах асра тытас пулать. Кунта вăл ĕçе питех те япăх йĕркеленĕ-ха. Районра 106 колхоз. Вĕсенчен 68 колхозра агротехникăна пачах вĕренмеççĕ.

Агротехникăна вĕренесси — государствăллă пысăк ĕç. Ăна пур колхозсенче йĕркелесе, куллен ертсе пырас тĕлĕшпе партипе совет тата çĕрĕç органĕсен çине тăрса ĕçлемелле, лайăх ĕçлекен стахановла шкулсемшĕн, агрокружоксемшĕн кĕрешмелле. Колхозниксен массин агрономи пĕлĕвĕсене ӳстерсе пынă май, тырпул тухăçлăхне çуллен çул хăпартса пырăпăр, çуллех 7—8 миллиард пăт тĕштырă туса илессине пурнăçа кĕртĕпĕр.

ÇĔРĔН СУХАЛАНАКАН СИЙНЕ ТАРĂНЛАТАС ĔÇ

Ялхуçалăх наукисен В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Академийĕнчи канашлу

Ялхуçалăх наукисен В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Академийĕнче январĕн 27-мĕшĕнче научнăй работниксен, çĕрĕç органĕсен представителĕсен, малта пыракан колхозсен председателĕсен канашлăвĕ уçăлнă. Канашлура çĕрĕн сухаланакан сийне тарăнлатас ыйтусене сӳтсе-явaççĕ.

Канашлăва уçнă чухне Академи вице-президенчĕ В. П. Мосолов çакна палларĕ тунă: тырпул тухăçлăхне хăпартмалли паха та кирлĕ условисенчен пĕри вăл—сухаланакан сие тарăнлагасси пулса тăрать.

В. П. Мосолов орденлă виçĕ колхоз çĕ çинчен интереслă даннăйсем илсе кăтартнă. Мускав облаçĕнчи «Победа» колхоз, сухаланакан тăпра сийне çултан çулах тарăнлатса пырса, 8 çул хушшинче кашни çулах кĕлтăпраллă çĕр çинче вăтам шутпа кашни гектран 23,5-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Горький облаçĕнчи «Советская деревня» колхозра колхозник-опытник Демин юлташ сухаланакан тăпра сийне 5 сантиметр тарăнлатса, гектартан илекен ыраш тухăçлăхне 20,9 центнертан 24,3 центнера çити хăпартнă. Чăваш АСС Республикинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз сухаланакан сие — 10—12 сантиметртан 23—25 сантиметра çити тарăнлатнă. Кăçалхи çул тăмлă 590 гектар çĕр çинчен кашни гектар пуçнех 29,9 центнер тырă туса илнĕ.

Çĕпĕрти, Украинăри тата çĕршывăн ытти районĕсенчи колхозсем те, хура тăпраллă уйсене тарăн сухаласа, çавнашкалах паха çитĕнӳсем тунă.

Канашлу 5 куна пырать. 60 доклад тата тĕрлĕ пĕлтерӳсем итлеççĕ. Канашлу сухаланакан тăпра сийне тарăнлатас тĕлĕшпе агротехникăллă кăтартусем палăртса хатĕрлет.

(ТАСС).

Халăха вĕрентес ĕç работникĕсен Пĕтĕм Российăри канашлăвĕ

Январĕн 28-мĕшĕнче автономлă республикăсенчи çутĕç халăх комиссарĕсен, халăха вĕрентес ĕçĕн облаçсемпе крайсенчи отделĕсен заведующийĕсен Пĕтĕм Российăри конференцийĕнче РСФСР Наркомпросĕн пуçламĕшпе вăгам шкулсен управленийĕн начальникĕ Парфенова юлташ тунă доклад тăрăх пренисем сарăлса кайнă. Халăха вĕрентес ĕçĕн Вологда область отделĕн заведующийĕ Бертегов юлташ Нюксенск районĕн паха опычĕ çинчен каласа панă. Районра пурне те вĕрентес ĕçе туса çитернĕ. Çак район область центрĕнчен нумай километр инçетре вырнаçса тăрать. Чи çывăхри чугунсул станци — 150 километртра. Апла пулсан та çак районра ачасене учета илес ĕçе питех те лайăх йĕркелесе янă. Кашни ялсоветрах вĕренме тивĕçлĕ ачасен тĕплĕн хатĕрленĕ списокĕсем пур. Ачасем занятисене мĕнле хатĕрленнине пĕрмаях контроллесе пыраççĕ. Нумай ялсоветсен председателĕсем ачасем шкула мĕнле çӳренине тăтăшах асăрхаса тăраççĕ. Вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ вăхăтра халăх хушшинче ăнлантарullă пысăк ĕç туса ирттернĕ. Кашни çемьерех учительсем, общественность представителĕсем пулнă.

Халăха вĕрентес ĕçĕн Краснодар крайĕнчи отделĕн заведующийĕ Пашкова юлташ Хотинри 3-мĕш номерлĕ шкул ĕçĕн интереслĕ опычĕ çинчен каласа панă. Шкул директорĕ Поперняк юлташ тăрăшнипе, вĕренекенсен ашшĕ-амăшсемпе шеф организацийĕсем пулăшнипе, шкул клубĕ туса лартнă, куба 250 çын кĕрсе вырнаçма пултарать. Халĕ шкулта ачасен 92 процентĕ вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Лекутский юлташ Дон çинчи Росговри 49-мĕш номерлĕ вăтам шкултан вĕренекенсем хушшинчи социализмлă ăмăрту çинчен каласа панă. Çак шкул РСФСР Наркомпросĕн куçса çӳрекен ялавне кĕрешсе илнĕ.

Пренисенче тата Житенев юлташ (Ленинград облаçĕ), Зауралец юлташ (Тамбов облаçĕ), Строганова юлташ (Алтай крайĕ), Лукин тата Орлов юлташсем (Мускав) тата ыттисем те тухса каланă. (ТАСС).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Яков Кузьмич Павлов юлташ. Етĕрнери çу тата спирт заводĕсенчи рабочисемпе служащисен тата инженерно-техническиработниксен пухăвĕ Павлов юлташа 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

ЯКОВ КУЗЬМИЧ ПАВЛОВ

Яков Кузьмич Павлов 1902 çулта, Тутар республикинче, Аксу районĕнчи Новое Маклашкино ялĕнче, чăваш семьинче çуралнă. Унăн ашшĕ чухăн пурăннă. Унăн, хăйĕн килçурчĕ пуллан пирки, çынсем патĕнче пурăнма тивнĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци Павлов юлташа хăйĕн тахçанхи ĕмĕтне — вĕренессине турнăçа кĕртме май парать. Вăл иккĕмĕш сыпăклă шкула вĕренме кĕрет. 1920 çулта, выçлăх пуçланнине пула, Павлов юлташ, шкулта вĕренме пăрахса, обществăллă тата совет ĕçĕнче ĕçлеме тытăнать. Павлов юлташ çав вăхăтра ялсоветра, волисполкомра, комсомолăн облаçри комитетĕнче тата ачасен çуртĕнче активлăн ĕçлет. Кулаксем тата вĕсен майлисем хĕсĕрленине пăхмасăр, Павлов юлташ, совет влаçне тĕреклетес тата çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Павлов юлташ парти ретне 1924 çулта кĕнĕ. 1924 çул вĕçĕнче ăна Тинĕс-Çар Флотне илеççĕ, унта вăл тăватă çул хушши пурăнать. Флотра пурăнни Павлов юлташăн политикăллă пысăк шкул пулса тăрать.

1928 çулта Павлов юлташ Хусанти коммунистла университета вĕренме кĕрет. Университетран вĕренсе тухнă хыççăн, вăл истори преподавателĕ пулса ĕçлеме юлать.

ВКП(б) XVII съезчĕ хыççăн Павлов юлташ Тутар республикинче, ответлă ĕçсенче, — «Красная Татария» хаçат редакцинче, парткабинет заведующийĕ, ВКП(б) Тутар Обкомĕн пропагандисчĕ пулса ĕçлет.

1935 çулти сентябрь уйăхĕнче Павлов юлташа хĕрлĕ профессура институтне вĕренме яраççĕ. Кунта вăл пĕрремĕш ĕçĕнче ĕçлет, историллĕ наукăна пăсакансене хирĕç çине тăрса кĕрешет. 1938 çул пуçламĕнче институтран вĕренсе тухать. Çавăн хыççăн ВКП(б) Центральный Комитечĕ Павлов юлташа Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен Мускаври Коммунистла Университет директорĕ пулса ĕçлеме лартать. 1939 çулта май уйăхĕнче, çав университета хупсан, Павлов юлташа ВКП(б) Центральный Комитечĕн аппаратне илеççĕ.

Темиçе уйăхран ЦК ВКП(б) Павлов юлташа Чăваш парторганизацине пулăшма ярать. Иртнĕ çулти март уйăхĕнче, партин ертсе пыракан органĕсене суйланă вăхăтра, Павлов юлташа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн виççĕмĕш секретарьне суйласçĕ, хальхи вăхăтра вăл çак ĕçрех ĕçлет.

— ☆ ★ ☆ —

Пур бригадăсем те ăмăртаççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Древкомбинатри пĕрремĕш номерлĕ цех коллективĕ парти конференцийĕ тĕлне производствăллă парнесем хатĕрлессишĕн вăя хурса ĕçлет. Пур бригадăсем те кунта пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

— Эпир ку таринччен ыттисенчен кайра пыманччĕ, яланах хамăр плана ирттерсе тултарнă. Çавăнпа Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине те çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илес тетпĕр. Бригада членĕсем пурте хастарлă ĕçлеççĕ,—тет бригадир Алексеев юлташ.

Иван Алексеевич бригадинче ĕçлекенсем производство техникине лайăх вĕренсе çитнĕ, кашни хăйĕн ĕçне тивĕçлĕн пурнăçлать. Материал кăна çителĕклĕ пултăр вĕсене, вара плана икĕ хут ирттерсе тултарма пултараççĕ. Ахальтен мар бригада стахановла бригада шутланать. Сăмахран, январĕн 19-мĕшĕнче рабочисем материал çитмен пирки чылай вăхăт ахаль тăнă пулсан та, плана 119,5 процент тултарнă.

Дубровская юлташ ертсе пыракан бригада январь уйăхĕнче уйрăмăнах лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Кулленхи плана вăтамран илсен бригада 150 процент таран тултарать. Уйрăм кунсенче татах та паха результатсем параççĕ. Çапла, сăмахран, январĕн 19-мĕшĕнче вăл плана 170,8 процент тултарнă.

Замкин, Кудряшев, Часова юлташсен бригадисем те чĕртăвар çителĕклĕ пулнă чухне начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех кулленхи плана ирттерсе тултараççĕ. Замкин юлташ бригади уйрăм кунсенче икшер хут ирттерсе тултарать.

Паянхи куна цехра 148 стахановец тата 57 ударник ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе паха примерсем кăтартаççĕ. Цех администрацин вĕсене çителĕклĕ таран материалсем парса тăмалла.

Х. Л.

,,Динамо" колхозри комсомолецсем специальноҫсене вĕренеççĕ. Колхозсенчи çамрăксем, специальноҫсем илсе обществăллă хуçалăха тĕреклетессишĕн кĕрешер!

Колхоз производствинче кирлĕ специальноҫсене вĕренетпĕр

Пирĕн Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз—республикăра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Вăл çуллен çул пысăк тухăçлă тырпул туса илет. 1939—1940 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă, кăçал та ăна выставка участникĕ пулма кандидата тăратнă.

Колхозри ВЛКСМ организацинче 33 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче ĕçлеççĕ. А. Спиридонов 236 ĕçкунĕ, В. Рыбаков 210 ĕçкунĕ тунă. Комсомолецсем плотниксем, машиноведсем пулса ĕçлеççĕ.

Колхоз хуçалăхĕ тĕрекленсе пынă май çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçсем вĕренес пулать. Кăçал колхоз пăру вити, сысна вити, чăх-чĕп фермине валли çурт, водопровод, кирпĕч, известь, черепица тăвакан завод тума палăртнă. Çаксене тума пире плотниксем нумай кирлĕ. Çак витесемпе заводсене тунă çĕрте ĕçлеме комсомолецсене уйăратпăр. Комсомолецсене строительствăра ĕçлеттерни вĕсене плотник ĕçне вĕренме май парать.

Пирĕн колхозра известь, кирпĕч тата черепица тума пĕлекенсем сахал. Çамрăксем ку ăпаласене тума пачах пĕлмеççĕ. Вĕсене вĕренме пултаратпăр эпир. Пире ватă колхозниксем пулăшаççĕ. Акă 65 çулти колхозник Алексей Кузьмич Мясникова илер. Вăл иртнĕ çулта колхоза калама çук лайăх известь туса пачĕ. В. Рыбаков комсомолец Мясниковран известь тума вĕренет. З. Петров, А. Ермолаев, А. Спиридонов, И. Каменский, П. Айдаров комсомолецсем кирпĕч тума, Е. Чернов комсомолец черепица тума вĕренеççĕ. Çавăн пекех колхоза водопровод хывма пĕлекенсем те кирлĕ. Г. Русскин комсомолец водопровод хывма вĕренет.

Колхозра кашни хуçалăхрах Ильич лампи çунать. Чылай ĕçсене электричество вăйĕпе тăваççĕ. Çавна пула колхоза электромонтерсем кирлĕ. Комсомолецсем ку ĕçе те вĕренме тăрăшаççĕ. А. Чернов комсомолец монтер ĕçне вĕренме кăмăл тăвать.

Тăван çĕршыв социализмлă ялхуçалăхне техникăн юлашки çитĕнĕвĕсем-



Икĕ уйăхри плана срокчен тултарма пуласçĕ

ÇЕМĔРЛЕ, январĕн 29-мĕш. **(Телефонпа хамăр корр.).** Ĕçмелли шывсем гуса кăларакан завод коллективĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăра пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Завод хăйĕн январь уйăхĕнчи планне 25-мĕш число тĕлнех 123,5 процент тултарчĕ. Амăртура уйрăмăнах Андреева, Чижикова стахановкăсем малта пыраççĕ, вĕсем кулленхи нормăна яланах 120—150 процент тултарса пыраççĕ.

Завод коллективĕ пратконференци уçăлнă тĕле икĕ уйăхри плана тултарассишĕн кĕрешет.

Пĕлтерӳсем

Слета хатĕрленеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Слета кайма 10 çын уйăрса пĕр команда тунă. Кашни делегатах медицина енĕпе тĕрĕслĕнĕ. Вĕсем пурте сывлăхлă, йĕлтĕрсем çине тăрса вăрăм çула тухма пултараççĕ.

Халь çамрăксем тренировкăсенче пулаççĕ.

«Коминтерн» колхоз слета яма Константинов бригадира уйăрнă. Унăн бригади çуракине хатĕрленес ĕçре малта пырать. Машинно-тракторнăй станцинчи çамрăксем хăйсен делегачĕ пулма М. Павлов тракториста суйланă.

ШАХАСАН. Республикăри слетра пулма районра малта пыракан колхоз çамрăкĕсене уйăрнă. Делегатсен команди Шупашкара тухса кайиччен кашни кунах тренировкăра пулать. Кашнине йĕлтĕр костюмĕ тупса панă. Кашни делегатах слета пысăк хаваспа тухса пырать.

Кросс умĕнхи вечер

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Енĕшкассинчи «Стрела» промартель çумĕнчи физкультура коллективĕ йĕлтĕрçĕсен кросне тимлĕн хатĕрленсе пырать. Кунта кроса 169 çын хутшăннă.

Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленсе ăмăртусемпе тренировкăсем ирттернĕ. Арçынсем 10 километрлă тата 20 километрлă походсене кайса килчĕç. Хĕрарăмсем те кроса пысăк хастарлăха хатĕрленеççĕ.

Кроса хутшăннă йĕлтĕрçĕсем ГТО значокĕн хĕллехи нормисене пачĕç. Çак нормăсене пурĕ 109 çын панă. П. Николаев, С. Андреев, А. Лукина тата А. Макарова юлташсем ГТО нормисене пысăк çитĕнӳсемпе пачĕç. Вăл шутран П. Николаев 20 километрлă дистанцине 2 сехет те 6 минутăра тухнă.

Физкультурниксем йĕлтĕрçĕсен кросне мĕнле хатĕрленсе çитни çинчен сӳтсе-явăрçĕ. Кун хыççăн вечер пулса иртрĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем слечĕ умĕн

Хулари физкультурниксем хăнасене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ

Январĕн 28-мĕшĕнче ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Д. Пароятников юлташ хулари спорт обществисен руководителĕсене пухса канашлу ирттерчĕ. Унта слета килекен çамрăк колхозник-йĕлтĕрçĕсене кĕтсе илесси çинчен сӳтсе-явăрçĕ.

Республикăри штаба пĕлтернĕ тăрăх, инçетри районсенчен делегатсем Шупашкара килме çул çине тухнă та ĕнтĕ. Паян, ыран тата тепĕр кунне делегатсен командисем пурте çул çине тухаççĕ. Вĕсем февралĕн 2-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен 2 сехет тĕлне Шупашкара çитмелле.

Хăнасене кĕтсе илме хулари спорт обществисене кашнинех уйăрăм районсем çумне çирĕплетнĕ. Сăмахран, «Медик» спорт обществи — Сĕнтĕр, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Советский; «Спартак» обществи—Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Октябрьский; «Восход» обществи — Красноармейский, Ишлей, Элĕк, «Правда» спорт обществи—Тăвай, Елчĕк районĕсенчен килекен делегатсене кĕтсе илеççĕ т. ыт. те.

Делегатсене кĕтсе илнĕ хыççăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксемпе пĕрле, хĕрлĕ площадьре комсомолецсен кросĕ пуçланнă ятпа çамрăксен хулари митингĕ пулать.

Колхозри комсомолецсем

ЕТЕРНЕ. Кăташри «Пионер» колхозри комсомол организаци хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать. Организацинче 17 комсомолец. Комсомол комитечĕ комсомолецсен политикăллă пĕлӳне ӳстерес, вĕсен производствăри активлăхне хăпартас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет. Комсомол организаци планпа ĕçлесе пырать. Комсомолецсен пухăвĕсем вăхăтра пулса иртеççĕ. Умра тăракан тĕрлĕрен ыйтусене сӳтсе-явăçсĕ. Член укçине вăхăтра пухса перекет кассине хывнă.

Комсомолецсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренеççĕ. Данилов юлташ 5-мĕш сыпăка вĕренсе конспект çырнă. Ытти комсомолецсем те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» интересленсе вĕренеççĕ. Харпăрăй тĕллĕн вĕреннисĕр пуçне, комсомолецсем ВКП(б) историне вĕренмелли кружока пысăк хаваслăхпа сӳреççĕ. ВКП(б) историне С. Пугачев, В. Дергачева, Е. Шушканова, А. Ижеева комсомолецсем лайăх вĕренеççĕ. Ку кружокăн занятийĕсене комсомолецсемсĕр пуçне колхозниксем, союзра тăман çамрăксем йышлăн çӳреççĕ.

1940 çулта ку организацири 3 комсомолец ВКП(б) ретне кĕнĕ.

Союзра тăман çамрăксем хушшинче ĕçлесси те йĕркеллĕ пырать. Комсомолецсем вĕсемпе калаçусем туса иртереççĕ, ĕçре хăйсем пек примерлă та хастарлă пулма вĕрентеççĕ, общественниклă ĕçе явăçтараççĕ, ВЛКСМ Уставĕпе паллаштараççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕ пулнăранпа 5 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

Комсомолецсенчен С. Данилов юлташ 1938 çултанпа «Пионер» колхозăн председателĕ пулса ĕçлет. 1936—37 çулсенче колхоз япăх ĕçленĕ пулсан, халĕ районра малта пыракан колхозсенчен пĕрри шутланать. Колхоз иртнĕ çулта гектартан 17,5 цент. ыраш, 16 цент. сĕлĕ, 15 цент. тулă, 26 центнер вир туса илсе районра мала тухрĕ. Уйри тырпулсене кĕске срокра, пысăк пахалăхпа пухса кĕнĕшĕн колхозпа унăн çыннисем республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕç. Колхозăн таврăлă сĕт-çу ферми—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ.

Комитет секретарĕ, ВЛКСМ райкомĕн бюро членĕ С. Пугачев юлташ виççĕмĕш çул ĕнтĕ II-мĕш бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлет. Бригада пур ĕçре те малта пырать.

Комсомолец С. Сынков виçĕ çул хушши вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлет — колхозри «Колхозник» стена хаçачĕн редакторĕ. Сынков вулав çурчĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатрĕ. 1939 çулта вулав çуртĕнче пĕтĕмпе те 300 кĕнеке кăна шутланнă, вулакансен йышĕ 60 çын пулнă пулсан, 1940 çулта 600 кĕнекене çитернĕ, вулакансен хисепĕ 125 çынна çитрĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ. ПВХО кружокĕнче 11 çын, ВС кружокĕнче 9 çын нормăсем парса значоксем илнĕ. Вулав çурчĕ çумĕнчи драмкружок 17 постановка панă. Агитколлективра 16 çын. Вулав çурчĕн справка сĕтелĕ лайăх ĕçлет.

«Колхозник» стена хаçачĕ колхозниксене ĕç дисциплинине хăпартма, стахановецсен паха опычĕсем тăрăх ĕçлеме вĕрентсе пычĕ. Çавăнпа пĕрлех колхозри çитменлĕхсене, наянсене хирĕç хытă кĕрешрĕ. Иртнĕ çулта вăл 17 номер тухнă. Хаçат содержани, культура тата пахалăх енчен лайăх тухса тăрать.

Комсомолка Екатерина Шушканова юлташ акушерка-трахсестра пулса ĕçлет. Вăл тăрăшса ĕçленипе ялта трахома тĕп тунă.

Халĕ комсомолецсем кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве анлăн сарса пыраççĕ. Вĕсем пурте колхозри стахановла шкула çӳресе, хăйсен агротехникăллă пĕлӳне хăпартаççĕ. Пугачев юлташ бригади кăçал гектартан вăтам шутпа 20 центнер тĕштырă туса илесишĕн ăмăртать. Халĕ ку бригада çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Çавнашкалах В. Федоров, Ф. Кольцов, К. Павлов комсомолецсем ертсе пыракан бригадăсем те çуракине лайăх хатĕрленеççĕ.

Колхоз çуракине хатĕрленсе 118 гектар çинче юр тытнă, 104 центнер вăрлăха триер витĕр кăларнă. Навозохранилищесем 4 тунă, уя 1040 лав тислĕк кăларнă, 10 тонна минераллă удобрени хатĕрленĕ, 65 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Г. Николаевпа С. Федоров комсомолец-тимĕрçсем 20 плуг юсаса пĕтерсе ытти ялхуçалăх машинисене юсама тытăнчĕç. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле колхоз çуракине хатĕрленес ĕçсене вĕçлеме обязательство илчĕ. Вăл обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе кашни бригадăрах ăмăрту сарăлса пырать.

Колхозниксемпе çамрăксем хушшинче комсомолецсем пысăк авторитетпа усă кураççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Швейпромсоюз артелĕсенче

Швейпромсоюз артелĕсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртме пуçларĕç. Пăрачкаври Киров ячĕпе тăракан артель çакăн пек ĕçсем тума палăртрĕ: тумтирсене химиллĕ меслетпе тасатса сăрлакан мастерской, пулă тытмалли сĕрекесем тăвакан мастерской, кивĕ тумтирсене тата трикотажсене туянса, вĕсене юсаса лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлекен мастерской тума шутлаççĕ. Артель 1941 çулти плана ӳстерме шутлать. Малтанхи планран иртерсе татах 115.000 тенкĕлĕх продукци кăларма палăртаççĕ.

Улатăрти «Красная швея» артель çумĕнче мамăкла çивиттисем çĕлемелли производство йĕркелеççĕ. Ана вĕсем сĕвĕ хыççăн юлакан отходсенчен çĕлеççĕ. Çавăн пекех кунта елкăна капăрлатмалли япаласем, улăм шĕлепкесем тăвассине йĕркелеме тытăнаççĕ. Ку артель те хăйĕн производство планне 130.000 тенкĕлĕх ӳстерет.

Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артель çĕнĕ ассортиментсем туса кăларнипе, вылямалли япаласем хатĕрленипе, сĕрекесем, пир-авăр таврашсем тунипе производство планне 75.000 тенкĕлĕх ӳстерет.

Каранъялĕнчи «Труд» артель (Октябрьский р.) тир-сăран завочĕ туса çитерет. Унта кĕрĕк татăксенчен хром тума тытăнмалла. Кунтах тата колхозсемпе колхозниксем валли михсем туса парассине йĕркелеççĕ.

Альгешри «Паха тĕрĕ» артель те сĕрекесем, спортивнăй сеткăсем тăвас ĕçе пуçарса ярать.

Çапла вара Швейпромсоюз артелĕсем вырăнти чĕртаварсенчен куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине çĕнĕрен организацилесе, кăçал малтан пăхнă планран иртерсе çĕнĕрен 700.000 тенкĕлĕх продукци пама палăртаççĕ.

Уйрăмăнах ача-пăчасем валли выляма лли япаласем туса кăларассине пысăклатаççĕ, 1941 çулта план тăрăх 110.000 тенкĕлĕх продукци кăлармалла пулать. Тумтирсене химиллĕ майсемпе тасатас тата сăрлас тĕлĕшпе 350.000 тенкĕлĕх ĕçлемелле. 70.000 тенкĕлĕх сĕрекесем тумалла.

Кусемсĕр пуçне вак-тĕвек производствăсем вуншар çĕрте тумалла пулать. Чылай районсен центрĕсенче çĕвĕ артелĕсем пуласçĕ. 15 артель тĕрлĕ ялсенче çĕлемелли тата тĕрлемелли отделенисем 20 çĕрте уçаççĕ. Çак ĕçсем вĕсем куллен кирлĕ таварсене ытларах кăларма май параççĕ.

А. ПОТЯНОВ.

Швейпромсоюзăн производство отделĕн заведующийĕ.

Выранти промышленноса вайлатса пыма пулаççĕ

Çĕрпӳ районĕнче Октябрьти социализмлă революциччен пĕр промышленноçлă предприяти те, пĕр артель те пулман. Барашевпа Курбатов хуçасен виçĕ арман пулнă. Акă ĕнтĕ районăн революциччен пулнă пĕтĕм промышленноçĕ!

Революци пулнă хыççăн вырăнти промышленность тата промысла кооперацийĕн предприятийĕсем ӳссе пыма тытăнчĕç. Районра примус горелкисем тăвакан завод, апат-çимĕç комбиначĕ, кӳршек-чӳлмек тăвакан мастерской, тӳмме туса кăларакан «Перламутр» фабрики тата Туçи, Хорнзор, Хорăнвар, Çĕнъял-Чупай ялĕсенче промысла артелĕсем пур. Çак предприятисемпе артельсем ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине çулран-çулах ӳстерсе пыраççĕ. Çапах та вĕсем ĕççыннисен куллен ӳссе пыракан ыйтăвне тивĕçтерме пултараймаççĕ-ха. Вырăнти чĕртавартан ура па-çуна, хăмăт-ĕнерчĕк, урапа маçĕ, кӳршек-чӳлмек, кирпĕч, известка, атăпушмак туса кăларас, пиравăр тĕртсе кăларас ĕçсене кирлĕ пек организацилемен. Çавăн пекех кӳлĕсемпе ĕвесенче пулă ĕрчетес, сад-пахчи çимĕçсемпе хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçсене те тивĕçлĕ вырăна лартман. Районăн çак ĕçсене пурне те ăнăçлăнах туса пыма пултарать.

Промышленность предприятийĕсенче рабочисемпе служащисем тата промысла артелĕсен членĕсем ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ вырăнти чĕртаварсен куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановленине пысăк активлăхпа сӳтсе-явăçсĕ, куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларассине ӳстерес тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илеççĕ. Нумайах та пулмасть примус горелкисем тăвакан заводри рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулнă. Кунта чĕртавар отхочĕсенчен вилкăсем, чей кашкăкесем, вешалкăсем, примус йĕпписем тăвас ĕçе организацилеме тата уйрăм цех уçса сĕтелсем, парттăсем туса кăларма пулнă. Çапла вара ку завод чĕртавар отхочĕсенчен кăçал пĕр миллион тенкĕлĕх продукци кăларма пултарать. Завод дирекцийĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан цех организацилеме тытăннă та ĕнтĕ. ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле ку цехран пĕрремĕш продукци кăларма ĕмĕтлеççĕ.

Районри апат-çимĕç комбинатĕнче тыснасене тăрантарса самăртас ĕçе организацилеме пулаççĕ. Кунсăр пуçне комбинат дирекцийĕ хурт-хăмăр тата сад-пахчи продукцийĕсенчен тĕрлĕ çимĕçсем туса кăларма палăртнă. Кунтах пысăк кӳлĕ туса, унта пулă ĕрчетме шутлаççĕ.

Хорнзорти промысла артелĕ çĕнĕрен черепица тăвакан цех, атă-пушмак тата тумтир çĕлекен мастерскойсем уçма йышăннă. Лĕпсер ялĕ сывăхĕнче известка чулĕсен запасĕ нумай вырать. Туçири артель çакна шута илсе известка туса кăларас ĕçе организацилеме, кирпĕч туса кăларас ĕçе анăлатма шутлать. Абакассинчи артель ялхуçалăхĕнче кирлĕ инвентарьсем туса кăларассине анлăлатса, урапа-çуна, хăмăт-ĕнерчĕк тата ыттисене те районри ĕççыннисем валли кирлĕ чухлĕ кăларса тăма йышăннă.

Старак ялĕнче çăматă йăвалакан кустарьсем 300 çынтан иртеççĕ. Район Совечĕн исполкомĕ ку ялта тир тăвас, çăматă йăвалас тĕлĕшпе ĕçлекен мастерской кăçалхи пĕрремĕш кварталта ĕçе яма палăртнă.

Çĕрпӳ районĕ шкулсемпе больницăсем тата ялсенчи ĕççыннисем валли хутмалли вутă Атăл урлă е чугунçулпа турттарса килет. Вăтам шутпа ялсен пĕр кубла метр вутă 55—60 генке ларать. Ункă тата Çавал шывĕсем тăрăх, «Кульмет», «Емĕт» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем сывăхĕнче торф запасĕ нумай. Уйрăм вырăнсенче кунта торф выртакан сий 4 метртан та иртет. Торфа вутă вырăнне хутма пуçласан, район вутă тĕлĕшпе тăракан ыйтăва çăмăллăнах татса пама пултарать.

Партипе совет организацийĕсем, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперати артелĕсенчи работниксем ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕç. Çак постановленине пурнăçа кĕртни вăл куллен кирлĕ таварсем кирлĕ чухлĕ туса кăларма, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшать.

ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

Самообложени çинчен

Иртнĕ çулти практика çакна кăтартса пачĕ: самообложени шутласа хунă чухне уйрăм районсенче пысăк йăнăшсем тунă, закона пăснă тĕслĕхсем пулнă. Хăшпĕр районсенче самообложени хурассине граждансем çурринче яхăн тухăннă пухусенчех ирттернĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ишеккасси ялсоветĕнче мĕнпур граждансенчен 19 процĕнчĕ пухăннă пухура самообложени йышăннă.

Уйрăм çынсенчен илмелли самообложени тӳлевĕсене тĕрĕс мар палăртнисем те сахал мар пулнă. Комсомольский районри Александровка ялсоветĕнче граждансен пухăвĕ самообложенине единоличниксем çине вĕсен çĕрĕсене кура хунă, çав хушăрах лашасене шута илмесĕр хăварнă. Улатăр районĕнчи Чуварлей ялсоветĕнче рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем çине самообложени хумасăр хăварнă, Çĕмĕрле ялсоветĕнче (çав районах) единоличник хуçалăхĕсен мĕн чухлĕ самообложени тӳлемеллине палăртман.

Комсомольский районри Чичкан ялсоветĕнче граждансен пухăвĕ самообложени укçипе ăçта тата мĕн чухлĕ хисеппе усă курмаллине, самообложени укçине мĕнле сроксенче тӳлемеллине кăтартса паман.

Чылай районсенчи ялсенче законпа пăхман мероприятисемшĕн самообложени укçи илнĕ. Пăрачкав ялсоветĕнче шкулти лашана тытса тăма 150 тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Черепаново ялсоветĕнче ялсовет канцелярине юсама пин тенкĕ, Канаш районĕнчи Яманкасси ялсоветĕнче шкул участокĕ тавра карта тытма 2 пин тенкĕ самообложени укçинчен расходлама пăхнă.

Хăшпĕр ялсоветсенче самообложени укçине вăхăтра пухма, пухнă укçапа вăхăтра тата тĕрĕс çă курма тăрăшман. Иртнĕ çулта Етĕрне районĕнчи Чебаково ялсоветĕнче 4300 тенкĕ, Чаганар ялсоветĕнче—2800 тенкĕ, Мучар ялсоветĕнче 1800 тенкĕ пухса çитермен. Иваново ялсоветĕнче самообложенин 11.108 тенкипе, Аслă Мучар ялсоветĕнче—8.456 тенкипе тĕрĕс мар усă курнă.

1940 çул тата çакна кăтартса пачĕ: самообложени укçине хурассине иртерех ирттерни—укçасене хăвăртрах пухма, çавна май палăртнă мероприятисене вăхăтра пурнăçлама май парать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1940 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, 1941 çулшăн самообложени хурассине январь уйăхĕнче тытăнса февраль уйăхĕнче вĕçлемелле. Самообложенине тĕрĕс хурас шутпа райсовет исполкомĕсен ялсоветсен председателĕсемпе секретарĕсене ĕçе организацилесси çинчен, 1941 çулта самообложенине мĕнле шутласа хумалли çинчен инструкцисем памалла. Ялсоветсене практикăллă ĕçре пулăшма кашни ялсовет çумне райсовет исполкомĕсен депутачĕсене çирĕплетмелле.

Самообложенине палăртакан пухусенче ялсовет исполкомĕсен председателĕсен 1940 çулта самообложени укçине мĕнле пухни тата çав укçапа мĕнле усă курни çинчен доклад туса памалла.

Пĕлтĕрхи йăнăшсене кăçал тепĕр хут тăвас мар тесен райсовет исполкомĕсен граждансен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă постановленине вăхăтра пăхса тухса çирĕплетмелле.

Райсовет исполкомĕсен, районсенчи финанс пайĕсен самообложенине тĕрĕс хурассине тăтăшах контроль туса тăмалла, укçине вăхăтра пухассишĕн кĕрешмелле.

В. ПТИЦЫН.

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

„Прогульщиксене хӳтлет“

«Чăваш Коммуни» хаçатăн кăçалхи 16-мĕш номерĕнче «Прогульщиксене хӳтлет» ятлă заметка пичетленсе тухнăччĕ.

Красноармейский районри прокурор Петров юлташ пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра асăннă фактсем тĕрĕс пулнă. Райсоюз председательне Сергеева уголовнăй кодексăн 111-мĕш статьи тăрăх тата Супар сельпо председательне Трофимова 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх айăплама ĕçе суда панă.

Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине ĕçпе ответлемелле

(Редакцине килнĕ çырусем тăрăх)

Ĕççыннисене çутта кăларас енĕпе ĕçлесси ялти клубсем, вулав çурчĕсем тата библиотекăсем умĕнче тăракан пит те пысăк тата ответлă задача шутланать. Çавăн пекех ку хисепе ялти шкулсем те кĕреççĕ. Вĕсем колхозлă ялсенче культура центрĕсем пулса тăмалла.

Федякино ялĕнчи интеллигенци хăйĕн çырăвĕнче ялсенчи культурăпа политпросвет ĕçне малалла татах та анлăрах сарса пыма чĕнчĕ. Ку ĕçе пуçарса пымалли пур майсене те тĕплĕн кăтартса пачĕç.

Пирĕн республикăри шкулсем, вулав çурчĕсем тата библиотекăсем федякинецсен чĕнĕвне хапăл туса йышăнчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене чылай аванлатрĕç. Шăхальти вулав çурчĕ (Вăрмар р.) ялти интеллигенцине таччăн сыхăнса ĕçлесе пырать. Вĕсем хăйсен вăйĕпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Колхозниксене лекцисем вуласа параççĕ. Ку ĕçе учительсене, медицина работникĕсене, агрономсене тата колхозник-стахановецсене анлăн явăçтарса пыраççĕ.

Лайăх ĕçлесе пыракан вулав çурчĕсен, клубсен, библиотекăсен хисепĕ ӳссех пырать. Вĕсене нумай илсе кăтартма пулать. Анчах культура учрежденийĕсем пурте мар лайăх ĕçлесе пыраççĕ-ха. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем хăшпĕр çĕрте вулав çурчĕсен ĕçĕсем те çине çаврăнса пăхмаççĕ. Ялсоветсем те кирлĕ пек пулăшма тытăнман.

Емĕртри вулав çурчĕ (Октябрьский р.) йĕркеллĕ ĕçлесе пымасть,—тесе пĕлтерчĕ пире П. А. Племянников корреспондент. Кунта вулав çурчĕн советне те суйланă. Анчах вулав çурчĕн заведующийĕ Смирнов активпа ĕçлессине хакламасть. Культурăллă-массăллă ĕçсене ирттерессине шкулти учительсем çине шаннă. Учительсем вара Смирнов ирттерессине кĕтеççĕ. Пĕрпĕринпе сыхăнса ĕçлеменни пысăк чăрмав пулса тăрать.

Вулав çурчĕ таса мар, плакатсем те тусанланса пĕтнĕ. Унтах тата чĕлĕм туртаççĕ. Вулав çуртне культура вучахĕ теме май çук. Çитменнине вулав çуртĕнче сивĕ. Çакăн пирки те вăл час-часах питĕрĕнсе тăрать.

Библиотекăра та кĕнекесем сахал. Унта кĕнекесем ытларах кӳрсе килме тăрăшмаççĕ. Иртнĕ çулта кĕнекесем илме сметăпа пăхнă укçа-тенкĕне усă курмасăр хăварнă.

Н. Яшков çырса пĕлтернĕ тăрăх, Шăпачаври вулав çуртĕнче (Ишлей р.) тасалăх çук, урайсене вăхăтра çумаççĕ. Кашни кун çӳçапсене те шăлса тасатмаççĕ. Унтах тата чĕлĕм мăкăрланă тарнине те курма пулать.

Вулав çуртне килекен хаçат-журналсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Хаçатсене пĕрле пухăнса сасăпа вулассине йĕркеллĕ ирттермеççĕ. Хаçатсене чĕлĕм туртма илсе каяççĕ.

Шахмат пĕр комплект кăна юлнă. Ялти çамрăксем драмкружок ĕçне йĕркелесшĕн. Вулав çурчĕн заведующийĕ Яковлев çамрăксен ыйтăвне пурнăçлама тăрăшмасть.

Кив-Тинкешре (Советский р.) 2 уйăх ĕнтĕ вулав çурчĕн заведующийĕ çук. Библиотека та начар ĕçлет. Унта 75 кĕнекерен мала мар. Ялсовечĕ вулав çурчĕн ĕçĕсемпе пачах интересленмест. Çакăн пек çырса пĕлтерчĕ Л. Иванов юлташ.

Çак тĕслĕхсем вулав çурчĕсене, колхоз клубĕсене, библиотекăсене тăтăшах тивĕçлĕ пулăшу парса тăма кирли çинчен каласçĕ. Партипе комсомол организацисен культурăллă ĕçсене йĕркеллĕн ирттермелле, вĕсен ку ĕçре лайăх ертсе пымалла.

Комсодсен смотрĕ

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ Шупашкар хула Совечĕн финанс пайне январĕн 15-мĕшпе февралĕн 15-мĕш хушшинче предприятисенче, учрежденисенче тата организацисенче комсодсен пĕр уйăхлăх общественниклă смотрне ирттерме ирĕк панă. Общественниклă смотр хулари предприятисемпе учрежденисенчи мĕнпур комсодсен ĕçне лайăхлатас, ĕçлеме çĕнĕрен килнĕ рабочисемпе служащисене заем çырăнма пулăшас, заемшăн укçа хывассине вăйлатас, хулари мĕнпур коллективсенче тата хула таврашĕнчи колхозсенче рабочисемпе служащисен, çавăн пекех колхозниксен пурнăçне ирĕклĕн страхлас ĕçе организацилесе, ăна кирлĕ пек туса пырас задача лартать.

Çаксемпе пĕрлех пур комсодсем çумĕнче те справка паракан сĕтелсем организацилемелле. Перекет кассисене çĕнĕрен вкладчиксем яваçтарас тĕлĕшпе тăтăшах каласусем ирттермелле. Çак ĕçре пуçламĕш парторганизацисем çумĕнчи агитаторсен пысăк пулăшу памалла. Вĕсен политикăллă агитаци ĕçне практикăллă ыйтусемпе çыхăнтарса пымалла.

Комсодсен общественниклă смотрĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине хатĕрленнĕ май пулса иртет. Смотр вăхăтĕнче мĕнпур ĕçе вăйлатса, партконференцине хулара укçа-тенкĕ пухăс тĕлĕшпе паха çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер, Улатăр хула Совечĕн финанс пайĕпе ăмăртăва тухса, хамăр çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех ăнăçлăн гултарар.

Е. КАЛИНОВСКАЯ.

Çутçанталăк пуянлăхĕпе усă курма пĕлмелле

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕç.

Çак постановленине пурнăçа кĕртни вырăнти промышленноçа анлăн сарса пыма, продовольстви таварĕсене вырăнтах нумай хатĕрлесе кăларма май тарать. Вăл политикăпа хуçалăх тĕлĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вырăнсенче партипе совет органĕсен вырăнти промышленноçа сарса пырас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Ку ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕсен пуçарăвĕнчен килет.

Вăрнар районĕнче вырăнти промышленноçа сарса пыма условисем çитĕклĕ. Кунта Кĕçĕн Çавал шывĕ юхса выртать, ун пек юханшывсем тата вĕсен тăршшĕпе темĕн чухлĕ тарăн авăрсем пур. Çак шывсенче темĕн тĕрлĕ пулăсем пурăнаççĕ. Анчах çак шывсенче пулă ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе ку тариннчен никам та шутласа пăхман.

Вăрнар вăрманпромхозĕнче те кӳлĕсем туса пулăсем тата хур-кăвакалсем ĕрчетме май пур. Ĕçе тимлесе пуçăнсан вырăнтах продовольстви нумай хатĕрлесе тăрăшсан, 1940 çулта хĕлле валли пахча-çимĕçсем нумайрах хатĕрленĕ. Купăста, хăяр чылай тăварланă, çĕрулми те чылай тесе калас пулать.

Пирĕн задача — çак пахча-çимĕçсене лайăх пăхса усрасси пулса тăрать.

Анчах фактсем пахча-çимĕçсене лайăх пăхса усрас ĕçе Шупашкарти складсенче ку тариннченех йĕркелеменни çинчен каласçĕ. Уйрăм складсенче пахча-çимĕçсем, уйрăмах çĕрулми, пăсăлаççĕ, çĕреççĕ.

Чебторгăн Кировски поселок патĕнчи çĕнĕ склачĕсенче çĕрулми шăнса пăсăлса кайнă. Складра сивĕ, тасамарлăх, йĕркесĕрлĕх. Çак пăсăлма пуçланă çĕрулмине халĕ Шупашкарти магазинсенче çур хакпа, тепĕр майлă каласан, пĕр килограмне 25 пуса сутаççĕ. Склад заведующийĕ Моховиков юлташ калана тăрăх, çур хакпа 40 тонна çĕрулми сутнă, халĕ татах 70 тонна сутма хатĕрлесе хунă. Кунсăр пуçне тата Моховиков юлташ хăй тĕллĕнех складрах сутă тума тытăннă. Вăл пĕр килограмм çĕрулмишĕн 10 пус кăна илет. Кама мĕн чухлĕ кирлĕ çавăн чухлĕ парать. Хăшĕпĕрисем тонна таранах илеççĕ. Акă, январĕн 18-мĕшĕнче килхуçи хĕрарăмĕ Неурова пĕр тонна, А. Кондина — пĕр тонна, Степанова (Чебторгри шофер арăмĕ) — 2 михĕ, Маркелова (Чебторграх ĕçлет) 2 михĕ т. ыт. те çĕрулми илеççĕ. Çак çĕрулмине çиме юрăхсăр, вылăх валли тесе, 10 пуса сутаççĕ. Анчах тĕрĕссипе апла мар. Мĕншĕн тесен, çĕрулми илме пынă çынсем хăйсем складран чи лайăх çĕрулмине суйласа илеççĕ. Çапла вара магазинсенче 25 пуса сутнă çĕрулмипе складран 10 пуса сутакан çĕрулми хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та çук. Чебторг руководителĕсем çапах та çакăн пек йĕркесĕрлĕхпе килĕшеççĕ.

Унтан та ытларах, Моховиков юлташ «тăрăшнипе» 10 тонна çĕрулмие юр çине кăларса пăрахнă. Склад йĕриташ çĕрулми сапаланса выртать.

Чебторгăн Кувшинкăри складĕнче 7 тонна çĕрулми пăсăлнă.

Чăваторгплодоовощтрестăн Кировски поселокри складĕнче сивĕ, кăмăсене хутмаççĕ. Хăярсене шăнтса янă, пичке пăккисене питĕрмен.

Столовăйсен тресчĕн Кувшинкăри складĕнче 300 тонна ытла çĕрулми выртать.

Трест директорĕ Стекольщиков юлташ складсенче çĕрулми мĕнле сыхланса выртни çинчен мĕн те пĕлмест. Çĕрулмие çĕрнисенчен суйласа тасатман. Складра çĕрулми нӳрелсе пăсăлни те сахал мар. Склада кĕнĕ çĕрте 3 тоннăна яхăн шăнса кайнă çĕрулми ещĕксенче, чăптасенче выртать.

Чылай складсенче температура нормине пăхăнмаççĕ. Чăваторгплодоовощтрест складĕнче 2 градус сивĕ, тĕрĕссипе 3 градусран кая мар ăшă пулмалла. Çавăнпа кунта хăяра шăнтса янă.

Суту-илӳ организацийĕсем час-часах: «Пирĕн пахча-çимĕçсене хĕлле валли вырнаçтарма складсем çитĕлĕксĕр», тесе ӳпкелешеççĕ. Пĕр енчен, ку тĕрĕс те. Çав вăхăтрах пушă складсемпе те усă курмаççĕ. Акă, Чăваторгплодоовощтрестăн Кировски поселокĕнчи пахча-çимĕç склачĕ кĕркунне ирех пушă тăнă, халĕ Чебторг çур складне пахча-çимĕçсем вырнаçтарнă, складăн пĕр енĕ халĕ те пустах тăрать.

Пахча-çимĕçсемпе сутă-илӳ тăвас ĕçре те пысăк ситменлĕхсем пур. Ку тариннчен суту-илӳ организацисем хатĕрленĕ пахча-çимĕçсене урăх республикăсене чылай ярса тăнă. Чебторг тата Чăваторг руководителĕсем ку шухăша халĕ те пăрахаймаççĕ. «Кăçалхи пек купăста, хăяр нумай тăварлани пулманха. Ку купăста-хăяра Шупашкарта сутса пĕтерме йывăр, катка-пичкесене путатса май уйăхĕнче тавăрса памалла», теççĕ. Çав вăхăтрах пахча-çимĕçсене сутас ĕçе йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Январь уйăхĕнче пĕрчĕк çĕрте кăна пахча-çимĕçсемпе сутă тунă. Çав вăхăтрах вĕсем складсенче пăсăлса выртнă. Пахча-çимĕçсене сутас ĕçе халĕ те йĕркелесе ситернĕ теме çук-ха.

Чебторгăн Хĕрлĕ площадьри магазинĕнче пахча-çимĕç отделенинче пĕр çын кăна сутать. Кунта пĕрмай черет. Пахча-çимĕç пахалăхĕ ситĕлĕксĕр, час-часах шăннă хăяр сутаççĕ, томат кулленех мар пулать. Помещенинче хĕсĕк, тасамарлăх, çав вăхăтрах магазинран склад туса хунă. Магазин айĕнче склад пур, унта сивĕ. Ку магазинра пахча-çимĕçсем сутас ĕçе йĕркелеме пур условисем те çитеççĕ: пахча-çимĕçсен отделенине аслăлатмалла та, унта пĕр продавец мар, икĕ виçĕ çын лартма май пур. 26 хваттерлĕ çуртри магазинра (Чувашская урамĕ) çĕрулми, томат сутмаççĕ.

Пичет çуртĕнчи магазинра ку тариннченех пахча-çимĕçсене сутас ĕçе йĕркелемен. Купăста, хăяр, помидор çук, çĕрулми пачах сутмаççĕ.

Чебторгăн спиртзавод патĕнчи 4-мĕш номерлĕ магазинĕнче те купăста, хăяр, помидор, çĕрулми сутас ĕçе ку тариннченех йĕркелемен.

Магазинсенче сухан, типĕтнĕ пахча-çимĕçсем, йывăçулми, варени, çырла-клюква, брусника т. ыт. пачах сутмаççĕ. Çак çитменлĕхсем пĕр Чăваторг, Чебторг руководителĕсем пахча-çимĕçсене лайăх пăхса усрас, суту-илӳ ĕçне организацилес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеменнинчен килеççĕ.

Хĕлле валли хатĕрлесе хунă пахча-çимĕçсене çĕртни вăл — преступлени. Куншăн айăплисене суд умĕнче ответ тыттармалла. Государство пурлăхне пирĕн хытă сыхлас пулать. Ку ĕçе чи малтан Наркомторгăн тĕрĕслесе тăмалла.

П. П.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Чугунçул транспорчĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн!

☆ ☆ ☆

Татах та лайăхрах ĕçлессишĕн

Республикăри чугунçул станцисемпе депосенче, разъездсемпе чугунçул юсакан бригадăсенче, уйрăм рабочисемпе работницăсем тата чугунçул командирĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Чугунçул работникĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн, производствăлла пысăк парнесем хатĕрлессишĕн кĕрешеççĕ.

Пирвайхи парнесем хатĕр. Вĕсем çинчен каласа параççĕ паян пирĕн хăçатра пичетленсе тухакан материалсем. Улатăрти, Канашри машинистсем йывăр составлă поездсем илсе çӳрессишĕн, поездсене стахановла хăвăртлăхпа чуптарассишĕн, паровозсене тирпейлĕн тытса сыхласа усрассишĕн, топливо перекетлессишĕн пĕрперинпе ăмăртаççĕ. Ăмăртун пирвайхи результачĕсем начар мар.

Çитĕнӳсем пысăк. Вĕсене тĕрĕс хаклама пĕлес пулать. Лăпланса ларни пулмалла мар. Тӳрех калас пулать, пирвайхи çитĕнӳсем пысăк пулин те, вĕсем пирĕн ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене пĕтернине, мĕнпур резервсемпе усă куркине пĕлтермеççĕ. Çитменлĕхсем нумай, вĕсем çинчен пĕтĕм сасăпа хыттă калас пулать.

Улатăр, Канаш, Шупашкар тата ытти станцăсенче графиксене час-часах пăснине курма пулать. Мĕншĕн пăсăлаççĕ-ха? Сăлтавсем нумай: хăшпĕр чухне паровозсене вăхăтра хатĕрлеймеççĕ, е депоран срокра юсаса кăлараймаççĕ; час-часах поездсем семафорсене уçасса кĕтсе тăраççĕ, е çулсене çийĕнчех юсаса тăраймаççĕ т. ыт. те. Çак сăлтавсене пĕтересси пĕтĕмпех çынсенчен, вĕсем хăйсен ответлăхне туйса тăнинчен, ĕçе вăхăтра туса пынинчен килет.

Чугунçул транспорчĕ çинче ĕç тата производство дисциплини пит те çирĕп пулмалла. Простойсăр, браксăр, график тăрăх ĕçлесси çирĕп дисциплинăсăр пулма пултараймасть.

Станцăсенчи культурăсăрлăха тата пассажирсемшĕн пĕтĕм тимлĕхпе тăрăшманнине текех чăтма май çук. Канашра та, Шупашкарта та — тӳррипе каласан, пур станцисенче те, тасалăх çителĕксĕр, буфетсем, хĕрлĕ кĕтессем начар ĕçлеççĕ, е вĕсем хăшпĕр чухне пачах ĕçлемеççĕ; билет сутакан кассăсене вăхăтра уçмаççĕ; кĕтсе лармалли залсене лайăх йĕркене кĕртмен. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Кашни утăмрах унтăн тăрăшнине, ăна кăмăллăн кĕтсе илнине пассажир туйтăр — çакăншăн кĕрешмелле.

Чугунçул транспорчĕшĕн хĕллехи çанталăк — ответлă тапхăр. Пĕчĕк кăлтăксем те пысăк çухатусем патне илсе пыма пултараççĕ. Çулсене юртан тасатса тăмалла. Ку тĕлĕшпе районри организацисен, колхозсен чугунçул транспортне çителĕклĕн пулăшас пулать.

Хăшпĕр хуçалăх организацисем вагонсене вăхăтра пушатмасăр тытса тăнăшăн чугунçул станцисене пинĕ-пинĕпе штраф тӳлеççĕ. Государствăна хирĕçле çак практикăна пачах пĕтермелле. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен государство укçине унталла-кунталла сапаласа пĕтерекен хуçалăх организацисен ĕçĕсене тишкерсе пăхас пулать, вĕсен руководителĕсене ответ тыттармалла.

Вăйланнăсемĕн вăйланса пыракан социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса тата конкретлăн ертсе пырса, чугунçул транспорчĕн ĕçне тата темиçе хут лайăхлатмалла, партин XVIII конференцийĕ валли чăннипех пит те пысăк парнесем хатĕрлемелле

—≈≈≈≈≈≈—

Стахановла вахтăсем

Улатăрти паровозсем юсакан завод коллективĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илес шутпа икĕ хутчен—январĕн 10-мĕшĕнче тата 15-мĕшĕнче стахановла вахтăсем туса ирттерчĕ. Çак опыт халиччен усă курман ресурссене, ĕç тухăçлăхне хăпартма тата продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме темĕн чухлĕ пысăк резервсем пуррине кăтартса пачĕ.

Заводра социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса пыраканни—тимĕрçӳ цехĕ пулса тăрать. Цех начальникĕ пулса Уткин юлташ ĕçлет. Январĕн 10-мĕшĕнче пĕтĕм цех стахановла вахтăна тăрса нихăçан пулман çитĕнӳ турĕ. Ку кун пĕрремĕш смена хăйĕн заданине 374 процент, иккĕмĕш смена—498 процент, виççĕмĕш смена—411 процент, пĕтĕм цех тăрăх илсен, пĕр кун хушшинчи плана 410 процент тултарнă. Стахановла вахтăна январĕн 15-мĕшĕнче иккĕмĕш хут тăрсан татах та чаплăрах çĕнтерӳсем тунă. Сăмахран, пирвайхи икĕ смена хăйсен планĕсене 421—366 процент тултарнă пулсан, виççĕмĕш смена плана 759 процент, пĕтĕм цех—425 процент тултарнă.

Цехра паллă стахановецсем нумай Вĕсем кулленхи заданисене 7—8 хут ытларах тултараççĕ. Стахановец Ф. Макшанов юлташ стахановла вахтăна пирвайхи хут тăрсан нормăна 865 процент, иккĕмĕшĕнче—1014 процент тултарнă. Фомин, Мурашкин, Александров, Раскин, Орлов юлташсем те стахановла вахтăсене тăрса 4—7-шер норма тунă.

Тимĕрç цехĕн паха опычĕ тăрăх ытти цехсем те ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе чылай ӳсĕмсем турĕç. Урапа тата тимĕр шăратакан цехсем январьте çуруйăхри плана 150 процент тултарма обязательство илнĕччĕ. Çак обязательствăна вĕсем ытлашшипех пурнăçа кĕртрĕç: çуруйăхри плана урапа цехĕ—170 процент, тимĕр шăратакан цех 179 процент тултарчĕç. Ку цехсенче те, тимĕрç цехĕнчи пекех, уйрăм стахановецсем 3—4-шар норма тăваççĕ.

Заводра ытти цехсенче те (токарнăй, котельнăй т. ыт. те) стахановла вахтăсем туса ирттерчĕç, ĕç тухăçлăхне чылай хăпартрĕç. Заводри мĕнпур цехсенче партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртури çĕнтерӳсене çырса пыма ятарласа кĕнеке тунă. Кĕнеке çине производствăра малта пыракан рабочисен ятне çырса хураççĕ. Çакă вăл социализмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлатса пыма пулăшать.

Хальхи вăхăтра завод коллективĕ пит те пысăк çĕкленӳпе ĕçлет, партин XVIII конференцине пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Анчах хăшпĕр цехсенче, уйрăмăнах сборочнăй цехра, ĕççем начар-ха. Вăл çуруйăхри плана 50 процент çеç тултарчĕ.

Завод коллективĕн кая юлса пыракан цехсене малти рете кăларассишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

С. Ф.

Ӳсĕм çулĕ çинче

Чугунçул транспорчĕн ĕçĕнче сезонлăх пулмалла мар, унăн ĕçĕн хăвăртлăхĕ хĕллехи çанталăкра çуллахинчен нимĕн чухлĕ те чакмалла мар. Çакна ыйтать чугунçул работникĕсенчен пирĕн социализмлă çĕршыв. Улатăр станцинчи рабочисем, инженер-техничексем работниксем çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пухасси çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени чугунçул станцинчи коллективăн хастарлăхне çĕклесе ячĕ. Конференцине хатĕрленес ятпа пулса иртнĕ пухусенче станцăри коллектив тата, уйрăм рабочисем те хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем хĕл хушшинче çуллахинчен натăр мар, татах та лайăхрах ĕçлеме, пĕр авари те тăвас мар, простойсене пĕтерес, топливăна перекетлес, ĕçре пĕр брак та тăвас мар тесе сăмах панă.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Улатăрти чугунçул станци работникĕсем хăйсен сăмахĕсене ĕçпе çирĕплетсе пыраççĕ, ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Малтанхи утăмсене итог тума пулать те ĕнтĕ.

Хĕл кунĕнче хальхи пек ăнăçлăн ĕçленине Улатăр станцинчи работниксем астумаççĕ. 1937 çултанпа вагонсен простой пулнине чакармалли плана çуллахинчен нимĕн чухлĕ те чакмалла мар. Çакна ыйтать чугунçул работникĕсенчен пирĕн социализмлă çĕршыв. Улатăр станцинчи рабочисем, инженер-техничексем работниксем çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Вăл вăхăтра Канаш станцинче икĕ чугунçул пĕрлешнĕ. Кунта умлăн-хыçлăнах поездсем иртсе çӳрени, маневр тăвакан паровозсем вĕçĕ-хĕррисĕр чашлатни тата çухăртни, лини çинче ĕçлекенсем юрăсем кĕвĕлени Назаровăн кăмăлне çĕкленĕ, çĕнĕ туйăм çуратнă. Вăл туйăм — машинист пуласси.

— Паровозсем çине шыв тултарнă çĕрте ĕçленĕ чухне те, киле тавăрăнсан та шухăш тухмасчĕ, — каласа парать халĕ Назаров. — Машинист пуласси çине шанса пурăнаттăмччĕ эпĕ яланах.

1930 çулта Назаров юлташ машинист пулас çулпа пирвайхи утăм тăвать. Ăна ударлă ĕçленĕшĕн паровоз çинче кочегар пулса ĕçлеме лартаççĕ. Вăл паровоз çинче пĕтĕм пултарулăхне çĕнĕ ĕçе вĕреннĕ çĕре парать. Тата тепĕр çулталăк. Назаров — машинист помощникĕ. Ку ĕçре те вăл яланах паха примерсем кăтартса ĕçленĕ.

Павел Назарович Назаров машинист пулса ĕçлеме тытăннăранпа икĕ çул çитет ĕнтĕ. Çак çулсенче унăн пурнăçĕ нумай опытсемпе пуянланнă. Вăл 1938 çулта йывăр составлă поездсем илсе çӳреме тытăнать. Темиçе вунă поезд илсе çӳренĕ, темиçе тонна кăмăк перекетленĕ. Иртнĕ çулти декабрьте кăна 15 тонна перекетленĕ. Чылай çулсем ĕнтĕ пĕр аварисĕр ĕçлесе пырать. Çаксеммĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамотипе наградăланă, Канашри ĕççыннисем райсовет депутатне суйланă. Сахал мар хутчен премисем илнĕ. 1940 çулта лайăх ĕçленĕшĕн халĕ çеç Нарком наградине илнĕ.

* * *

Хăйĕн бригадипе пĕрле Назаров юлташ черетри рейса кайма хатĕрленет. Паян татах вăл партин XVIII конференцийĕ ячĕпе йывăр составлă поезд илсе кайма шут тытнă.

— Павел Назарч, станцăран ыйтса пăхасчĕ, поезд часах параççĕ-и, — ыйтать машинист помощникĕ Нараткин юлташ. — Эпĕ тĕрĕслесе пĕтертĕм.

— Ан васкăр, часах каятпăр, тепĕр хут тĕрĕслĕр, 2300 тонна илсе каймалла паян, — илтĕнет ответ.

Паровоза, унăн пайĕсене татах та татах сăнаççĕ. Машинист та, машинист помощникĕ те, кочегар та—кашниех хăйĕн ĕçне тăвать, пулас рейса конференци ячĕпе ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме кирлисене хатĕрлет. Обязательствăсем пĕчĕк мар вара. Вĕсем конференцине çул çинче брак пулассине пĕтĕмпех пĕтерме, топливăна 10 процент перекетлеме, технически хăвăртлăха ирттерсе тултарма, Лунин меточĕпе ĕçлеме сăмах панă.

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-электросварщик Е. С. Бухтулов юлташ партин XVIII конференцийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса сменăри нормăна 215% тултарнă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Е. С. Бухтулов юлташ. К. БАБАЕВ фотоукерчĕкĕ.

ГТО значокĕн нормисене 17 çын панă

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Спорт обществисенче, предприятисемпе учреждениссенче профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросне ирттернĕ май ГТО значокĕн хĕллехи нормисене паракансен хисепĕ ӳсет. Январĕн 1-мĕшпе 24-мĕш хушшинче профсоюзсен кросне 467 çын хутшăнă. Вĕсенчен ГТО значокĕн хĕллехи нормисене 147 çын панă.

Лунин меслечĕпе ĕçлесе

(Улатăр деповĕнчи партком секретарĕпе Петров юлташпа калаçнинчен)

Новосибирски чугунçул çинчи Лунин машинистăн пархатарлă ĕçне пĕтĕм çĕршыв пĕлет. Вăл яланах аварисĕр ĕçлет. Унсăр пуçне паровозăн «вак-тĕвек» кăлтăкĕсене хăйсен бригадин вăйĕпех юсать. «Вак-тĕвек» кăлтăксене вăхăтра юсани ăнсăртран инкек-синкек пуласран сыхлать, вăл пысăк çухатусенчен хăтăлма пулăшать.

Улатăр деповĕнчи машинистсенчен Лунин юлташ меслечĕпе пуринчен малтан Уваров машинист ĕçлеме тытăннă. Уваров юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамотипе наградăланă. Вăл паровозăн «вак-тĕвек» кăлтăкĕсене хăйĕн бригадин вăйĕпе юсать. Уваров юлташ пĕчĕк çитменлĕхсемшĕнех паровоза тихăçан та депона кĕртсе лартмасть, унăн паровозĕ яланах таса тата юсавлă, вăл простойсăр, аварисĕр ĕçлет.

Уваров юлташăн меслечĕсемпе ĕçлеме тытти мĕнпур машинистсене те вĕрентмелле, вара пирĕн ĕçре аварисем те, простойсем те, браксем те сахал пулаççĕ, е вĕсене пачах пĕтерме пулать. Унсăрăн çухатусен хисепĕ чакма мар, пысăкланать. Сăмахран, Улатăрти эксплоатациллĕ участокра кăçал январĕн пирвайхи çуруйăхĕнче вакТĕвек кăлтăксем тата техникăллă çитменлĕхсем пулнă пирки чылай поездсем 67 сехет хушши чарăнса ларнă. Çакна укçа çине куçарсан, вăл государствăна пинĕ-пинĕпе убытка кӳни пулать.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнсан, депо коллективĕ, уйрăмăнах топливо перекетлес тĕлĕшпе, пысăк çитĕнӳсем турĕ. Шутласан, хĕл кунĕсенче топливо ытларах пĕтмелле пек. Анчах тăрăшса ĕçлесен кирек хăçан та çак хаклă пурлăха перекетлеме пулать. Сăмахран, 1940 çулти июль уйăхĕнче Улатăр станцинчи депо 66 тонна кăмăк перекетленĕ пулсан, кĕркунне тата хĕл кунĕсенче татах та ытларах перекетленĕ: августра 100 тонна, ноябрьте 206 тонна, декабрьте 491 тонна. Топливо перекетлес тĕлĕшпе Якунин, Белоглазов, Лучагин машинистсем малта пыраççĕ.

Ыйтăр составлă поездсем илсе çӳрессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. 1941 çулти январĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнче пирĕн уйрăм машинистсем ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Сăмахран, Рожков юлташ норма тăрăх 1600 тонна вырăнне 2000—2240 тоннăна çити, Аникин юлташ — 2260 тоннăна, Ратников юлташ 2000 тоннăна çити илсе çӳреççĕ. Çапла вара кăçал планран иртерсе пĕтĕмпе 4707 тонна япала турттарнă.

Депори коммунистсен производствăри авангардлă ролĕ кунсеренех ӳссе пырать. Автомат цехĕн заведующийĕ пулса парти кандидачĕ Семенов юлташ ĕçлет. Вăл рабочисем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе анлăн туса пырать, тăтăшах производствăллă канашлусем туса ирттерет. Рабочисем паракан кашни паха сĕнĕве, е рабочисен пуçарăвне пурнăçа кĕртсе пырать.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле пирĕн коллектив татах та пысăк çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешет. Эпир социализмлă ăмăртупа стахановла движенине вăйлататпăр, ăна куллен ертсе тата пуçарса пыратпăр.

—≈≈≈≈≈≈—

Чугунçул çинчи лайăх работниксенчен пĕри

Çĕнĕ чугунçул тумалли вырăн çырма-çатраллă, лакăм-тĕкĕмлĕ вырăнсемпе пынă. Вырăнĕ-вырăнĕпе вăрман кашласа ларнă. Вак-тĕвек йывăç тымарĕсене кĕреçепе чавса е ломпа хирсе, ватă юмансен кăкĕсене аммоналпа сикерсе кăлармалла пулнă. Тăвайкиллĕ вырăнсенчи тăпрана экскаватор чавса тăнă. Колхозниксем те алла кĕреçе тытса нумай ĕçленĕ кунта. Айлăмлă тата лакăмлă вырăнсене тикĕслесе пынă. Плотниксем пысăк çырмасем урлă кĕперсем хывнă.

Арçынсем те, хĕрарăмсем те лашапа тата çуран та нумайăн ĕçленĕ. Инженерсемпе техниксем те, çулĕр мастерĕсем те сахал мар вăй-хал хунă кунта. Вĕсенчен чылайăшĕ кунта килсен хăйсен чаплă ĕçĕсемпе мухтава, чапа тухнă. Вĕсен ячĕсене пĕтĕм республика пĕлсе тăнă.

...1937 çулта, çуртри акса пĕтернĕ хыççăн, Тимĕрçкассине уполномоченнăй пынă. Çул тунă çĕрте ĕçлеме рабочисем пухса çӳренĕ вăл. Пулас çул пысăк вырăнта тăни малтанах палăрнă пулнă. Республикăна экономика тата культура тĕлĕшпе хăвăрттăн чечеклентерсе пымалла. Республика столицине—Шупашкара—Совет Союзĕнчи ытти хуласемпе чугунçул урлă çыхăнтармалла... Уполномоченнăй çакăн çинчен колхозниксене каласа кăтартнă. Колхозниксем кун хыççăн пĕр каварлă пулса ĕçлеме тухнă. Вĕсемпе пĕрле колхоз хĕрĕ Елена Осипова та пынă.

Кĕркуннепе çуркуннесенче сивĕ çăмăр çуса тăнă. Хĕл кунĕсенче шартлама сивĕсем тăнă. Анчах та Елена шăрăран та, сивĕрен те, çăмăртан та, юрган та хăраса тăман. Кирек-хăш вăхăтра та малта пыракан колхозниксемпе пĕр ретре тăрса ĕçленĕ.

...Канашран Шупашкар еннелле рельсăсем сарса килме пуçланă. Рабочисем рельсăсене костыльсемпе çапса шпалсем çумне çирĕплетнĕ. Метршарăн, километршарăн ӳссе пынă хурçăна витĕннĕ çул. Бригада Çĕрпӳ патнелле сывхарса çитнĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăн, Елена Осипова паровоз курма 51-мĕш километра тухса чупнă. Паровоз хăшлатса ларнă. Вăл питех те пысăк пек туйăннă. Куçран вĕçертме пĕлмен, чылай хушă пăхса тăнă вăл ăна.

Хăйăр тата рельса саракан бригадăри рабочисем пĕтĕм вăл хурса ĕçленĕ вăл кунсенче. Елена та, хăйĕн юлташĕсемпе, ывăнма та канма та пĕлмен. Рельсăсем сарса пыракан поезда хăвăртрах Шупашкара—Чăваш республикин столицине çитерме тăрăшнă.

Чугунçул строителĕсем çула эксплоатацине пама хатĕрленнĕ вăхăтра тата тепĕр пысăк задача—вырăнти колхозниксенчен чугунçул çинче ĕçлеме кадр хатĕрлес задача тухса тăнă. Станцă дежурнăйĕсем, стрелочниксем, çулĕр мастерĕсем, чугунçул юсакан рабочисем ытти çĕртен килессе шанмалла пулман.

Елена малтанхи вăхăтра нимĕнле пысăк ĕçех те вĕренме ĕмĕтленмен-и тен. Ялта ӳссе çитĕннĕ тата ниçтах та тухса курманскер, чугунçул çинче яланах ĕçлессе шанман та пулĕ. Анчах та ĕç хăй енне туртнă. Пĕрре те уйăрăлас килмен куntан. Чугунçула яланлăха эксплоатацине панă хыççăн та кунтах юлнă Елена. Халĕ вăл çул юсакан бригадăри работница.

Путевой обходчиксем хăйсем çумне çирĕплетнĕ участоксене пăхса тăраççĕ. Калăпăр, шпалсем çумне çирĕплетнĕ рельсăсем пушаннă, вырăнĕ-вырăнĕпе шпалсем айĕнчи тăпра тикĕс мар. Кун пек чухне рельсăсем виçерен ансăртарах е хĕсĕкрех пулаççĕ. Кун пек çул çинче çӳреме хăрушă. Обходчиксем ун пек çитменлĕхсем курсан, çул юсакан бригадăри рабочисене вăрçаççĕ. Елена вара шаблон тата мăлатук илет те çул тăрăх тухса утать. Рельсăсем выранта тăнине тĕрĕслет. Костыльсене мăлатукпа çапса хытарать. Вара çул çӳреме хăрушă мар, шанчăклă пулать.

Елена Осипова хăй çумне çирĕплетнĕ 7 километр çула кашни кунах лайăх пăхса тăрать. Плана кашни кунах 120—150 процент тултарса пырать. Паха ĕçшĕн темиçе хутчен те преми илнĕ. Техникăна вĕренмелли кружока çӳрет, хăйĕн пĕлӳне ӳстерет, татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшать. Хăй умне сигнализаци ĕçне «отлично» вĕренес задача лартнă. Ăна пурнăçлатех вăл.

Хамăр республикăра чугунçул тăвиччен Елена поездсем курман. Халĕ вăл кашни кунах пассажирсем тата грузсем турттаракан поездсем нумай курать. Вĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттерме тăрăшать. Пассажирсем илсе çӳрекен лайăх вагонсем çине ларса Шупашкара, Канаша, Ярославле... кайнă вăл.

Чугунçул тума нумай вăй-хал хунă. Нумай ĕçленĕ. Халĕ ăна йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Çакăншăн тăрăшать çул юсакан бригадăри лайăх работниксен чĕнĕ пĕри—Елена Осипова.

Т. МАЙОРОВ.

Чугунçул транспорчĕн малта пыракан çыннисем. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Канаш станцинчи йывăр составлă поездсем илсе çӳрекен машинистсем Назаров тата Романов, машинист помощникĕ Нараткин, Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец бригадир Голубев юлташсем.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

МАШИНИСТ

Павел Назарч (çапла чĕнеççĕ ăна юлташĕсем) Канашпа Çĕмĕрле, Улатăр, Юдино тата Канашпа Шупашкар хушшинчи чугунçул тăрăхĕнчи вырăнсене тĕплĕн сăнаса пыма пултарать. Ăçта кĕпер, тарăн çырма, вăрман пулнине, хĕллехи вăхăтра юр ăçта ытларах тулгарнине, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра нишлыв нумай пулакан вырăнсене вăл лайăх пĕлсе тăрать.

— Пĕлмесен те юрамасть, — тет вăл.— Поезда вăхăтра илсе çӳреме паровоза пĕлни тата ăна тирпейлĕ пăхса усрани кăна çителĕксĕрха, чугунçула, сигнализацине тĕплĕн вĕреннĕ, сигнализацине пăхăнса ĕçлемелле..

Калать çеç мар, Павел Назарч Назаров хăйĕн сăмахĕсене пурнăçа кĕртсе пырать. Çакă вара ăна тухăçлăн ĕçлеме тата тепĕр чухне ĕçре пулма пултаракан инкек-синкеке те вăхăтра сирсе пăрахма пулăшать.

... Ирхине аташнă çилтăман кăнтăр тĕлне чугунçул линине юрпа витсе лартнă. Поездсем те кая юлса çӳреме пуçланă. Хăвăртрах юр тасатакан машина кăларса ямалла пулнă. Анчах кун пек çанталăкра, сигнализаци пăллисем 30—40 метртан кăна курăннă чухне, никам та маршрутпа калсшăнах пулман. Ун чухне те Назаров çанталăкран хăраман, маршрут илсе Çĕмĕрлене тухса кайнă.

Канаш инçете юлнă, поезд Вăрнар патне çывхарнă. Паровоз Назаров пĕвне пăхăнса, лини çине тултарнă юра икĕ еннелле сирпĕтсе пыракан машинăна малалла тĕксе хăвăрттăн тыткăннă. Назаров паровоз мĕнле ĕçлемине кăтартакан приборсене сăнанă, çав вăхăтрах паровоз чӳречинчен пăхса пырса лини çинчи сигнализацине тĕплĕн асăрхаса пычă. Таврара нимĕн те курăнман, хутран-ситрен çеç километр юписем хыçала тăрса юлни палăрнă.

Вăрнар. Стрелкăран кĕнĕ-кĕменех паровоз вăйлăн чĕтренсе илнĕ те сасартăк чарăнса ларнă. Кăмăрак ывăтса тăракан кочегар хăй ӳкнипе тарăхса, машинистпа вăрçма та пикеннĕ. Анчах мĕн пулнине туйса илсен, яким калама ăптăраса «хăтăлтăмăр» тенĕ те, шăпланнă. Тепĕр вунпилĕк-çирĕм метртан паровоз поезд çине пырса çапăнма тултарнă. Анчах вăл пулман, ку чухне те машинист Назаров сигнализацине лайăх пĕлни, ăна тĕплĕн сăнаса тыни тата паровоза пăхăнтарма пултарни государствăн темиçе вунпăр çин тенкĕлĕх пурлăхне сыхласа хăварнă.

Ку вăл Павел Назарович Назаров машинист пулса ĕçлеме тытăннă хыççăн малтанхи çулĕнче пулнă.

* * *

Сталинла пĕрремĕш пятилетка çулĕсем. Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенче те çĕнĕ предприятисем, çĕнĕ гигантсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Ялхуçалăхĕнче коллективизаци анлăн сарăлса пырать. Çаксем чугунçул транспорчĕ умне пысăкрах та ответлăрах задачăсем лартнă. Чугунçул транспорчĕ грузсем турттарассине ӳстертĕр, хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлатăр тесен, ĕçлеме кадрсем кирлĕ. Çĕршер çамрăксем чугунçул çине ĕçлеме тухаççĕ. Канаш районĕнчи Мурзанкасси çынни Павел Назаров юлташ та Канаш станцинче ĕçлеме çав вăхăтра пырса кĕнĕ.

Вăл вăхăтра Канаш станцинче икĕ чугунçул пĕрлешнĕ. Кунта умлăн-хыçлăнах поездсем иртсе çӳрени, маневр тăвакан паровозсем вĕçĕ-хĕррисĕр чашлатни тата çухăртни, лини çинче ĕçлекенсем юрăсем кĕвĕлени Назаровăн кăмăлне çĕкленĕ, çĕнĕ туйăм çуратнă. Вăл туйăм — машинист пуласси.

— Паровозсем çине шыв тултарнă çĕрте ĕçленĕ чухне те, киле тавăрăнсан та шухăш тухмасчĕ, — каласа парать халĕ Назаров. — Машинист пуласси çине шанса пурăнаттăмччĕ эпĕ яланах.

1930 çулта Назаров юлташ машинист пулас çулпа пирвайхи утăм тăвать. Ăна ударлă ĕçленĕшĕн паровоз çинче кочегар пулса ĕçлеме лартаççĕ. Вăл паровоз çинче пĕтĕм пултарулăхне çĕнĕ ĕçе вĕреннĕ çĕре парать. Тата тепĕр çулталăк. Назаров — машинист помощникĕ. Ку ĕçре те вăл яланах паха примерсем кăтартса ĕçленĕ.

Павел Назарович Назаров машинист пулса ĕçлеме тытăннăранпа икĕ çул çитет ĕнтĕ. Çак çулсенче унăн пурнăçĕ нумай опытсемпе пуянланнă. Вăл 1938 çулта йывăр составлă поездсем илсе çӳреме тытăнать. Темиçе вунă поезд илсе çӳренĕ, темиçе тонна кăмăрак перекетленĕ. Иртнĕ çулти декабрьте кăна 15 тонна перекетленĕ. Чылай çулсем ĕнтĕ пĕр аварисĕр ĕçлесе пырать. Çаксеммĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ Грамотипе наградăланă, Канашри ĕççыннисем райсовет депутатне суйланă. Сахал мар хутчен премисем илнĕ. 1940 çулта лайăх ĕçленĕшĕн халĕ çеç Нарком наградине илнĕ.

* * *

Хăйĕн бригадипе пĕрле Назаров юлташ черетри рейса кайма хатĕрленет. Паян татах вăл партин XVIII конференцийĕ ячĕпе йывăр составлă поезд илсе кайма шут тытнă.

— Павел Назарч, станцăран ыйтса пăхасчĕ, поезд часах параççĕ-и, — ыйтать машинист помощникĕ Нараткин юлташ. — Эпĕ тĕрĕслесе пĕтертĕм.

— Ан васкăр, часах каятпăр, тепĕр хут тĕрĕслĕр, 2300 тонна илсе каймалла паян, — илтĕнет ответ.

Паровоза, унăн пайĕсене татах та татах сăнаççĕ. Машинист та, машинист помощникĕ те, кочегар та—кашниех хăйĕн ĕçне тăвать, пулас рейса конференци ячĕпе ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме кирлисене хатĕрлет. Обязательствăсем пĕчĕк мар вара. Вĕсем конференцине çул çинче брак пулассине пĕтĕмпех пĕтерме, топливăна 10 процент перекетлеме, технически хăвăртлăха ирттерсе тултарма, Лунин меточĕпе ĕçлеме сăмах панă.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă.
УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Германи крейсерĕ Çурçĕр тинĕсĕнче. Ăна нимĕçсен истребителĕ хŭтлесе пырать.
ТАСС фото-ŭкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Румынири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бухарестри полици префекчĕ генерал Митреа железногвардеецсем ĕçрен кăларса янă полицейски чиновникĕсĕне пурне те хăйсен вырăнне каялла илнĕ, железногвардеецсене пурне те вырăнтан кăларнă. Кашни железногвардеецах тытнă чухне унăн сумĕнче хĕçпăшал пулнă пулсан персе вĕлермелле тăваççĕ. Восстанине хутшăннă ытти железногвардеецсене тĕрмесене хупа-хупа лартаççĕ. Хула урамĕсем тăрăх çар отрячĕсен патрулĕсем çŭреççĕ, иртсе çŭрекенсенчен пуринчен те вĕсем кам пулнине ĕнентерекен удостоверенисем ыйтаççĕ. Салтаксен отрячĕсем хваттерсенче ухтарса çŭреççĕ, унта пурăнакансем восстание хутшăннине палăртма тăрăшаççĕ.

БУХАРЕСТ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Хаçатсенче правительство панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Вăл пĕлтерŭре легионерсен центрĕсенче ухтарусем туни çинчен каласа панă. Январĕн 26-мĕшне çитиччен пăлхавçăсенчен 39 пулемет, 666 винтовка, охотник пăшалĕсем 2.844 пăшал, 1.964 револьвер, 128 карабин тата ыттисене те туртса илнĕ. Малтан легионерсем туртса илнĕ 70 грузовика каялла илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румынире йĕркесĕрлĕх вăхăтĕнче темиçе миллиард лейлăх убыток пулнă. Уйрăмăнах нефтепромысласене пысăк сиен тунă.

БЕЛГРАД, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Вече» хаçатăн Софири корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бухарестран илнĕ юлашки сведенисем тăрăх, çак кунсенче пулса иртнĕ событисем вăхăтĕнче Румынире 5 пин çын ытла пĕтнĕ. Бухарестра 2 пин çынна яхăн вĕлернĕ.

—o—

Позĕаньре поляксен группине суд тунă

БЕРЛИН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Дейче альгемейне цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: Познаньре поляксен группине суд туса пĕтернĕ. Суд виçĕ куна пынă. Поляксене çакăнтăн айăпланă: Польшăпа Германи хушшинчи вăрçă умĕн вĕсем хĕçпăшаллă отряд организациленĕ, вăл отряд вăрçă вăхăтĕнче Польша облаçĕнчи немĕç граждăнĕсем çине пыраспыра тапăннă. Судпа айăпланнă 22 полякран 13 çыннине вĕлермелле тунă.

—o—

Германире ютçĕршывсенчи радиона итлекен çынсене тĕрмене хупса лартмалла тунă

БЕРЛИН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Вăрçă пуçланнă хыççăн Германире ютçĕршывсенчен паракан радиопередачĕсене итлеме чарнă, ун çинчен ятарласах закон кăларнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Катовицы, Франкфурт, Штутгарт хулисенче тата ытти вырăнсенче те ютçĕршывсенчен немĕç чĕлхипе паракан радиопередачăсене итленĕ çынсене 4—7 çуллăха тĕрмене хупса лартмалла тунă.

Пĕлтерŭре кăтартса панă тăрăх, Германири специальнăй судсем: ютçĕршывсенчен паракан радиопередачăсене итлени—«халăх интересĕсене хирĕç пыракан пысăк преступлени туни пулать», тесе шутласçĕ. «Çавăн пек преступлени тăвакансем каçару кĕтме пултараймасçĕ», тесе пĕлтереççĕ.

—o—

Англи командованийĕн представителĕсемпе Турци генеральнăй штабĕ хушшинчи калаçусем вĕçленнĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Англири çынсем хушшинче Англи командованийĕн представителĕсемпе Турци генеральнăй штабĕ хушшинче Анкара пуçланнă калаçусем вĕçленни çинчен пĕлтернĕ. Турцишĕн хăрушлăх тухса тăрас пулсан вăрçă ĕçĕсене мĕнле йĕркелесе ямалли çинчен план палăртса тухнă, тесе пĕлтереççĕ. Англи офицерĕсем Карабюкри металлурги комбинатне пăхма Анкараран тухса кайнă. Вĕсем Стамбулра тата, тен Франкире те, пулаççĕ, тесе шутласçĕ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: Ирландирен хĕвеланăç енче Германин инçете вĕçекен самолечĕ противникăн суту-илŭ тумалли пысăк мар парохочĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англин пĕр порчĕ тавра минăсем лартса тухнă. Ĕнер каçхине инçете перекен артиллери батарейисем Англин кăнтăр-хĕвелтухăç çыраннăнчи çар объекчĕсем çине персе тăнă.

Иртнĕ каçхине противник самолечĕсем Германи территорийĕ çине, çавăн пекех вăл оккупациленĕ территори çине те вĕççе пыман.

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтереççĕ: ыран январĕн 28-мĕш тенĕ чух çĕрле нименле пысăк ĕçсемех те пулман.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри çапăçура халĕ те лăпкă тăрать. Лондонра вĕçĕмренех 7 каç ĕнтĕ самолетсенчен сыхланма пĕр тревога та паман. Çапла лăпкă тăни çанталăк условисем начар тăнинчен килет, тесе шутласçĕ.

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх. Англи авиацийĕн министерстви кăлармăшкă коммюникере çапла каланă: паян кăнтăрла иртсен Германин темиçе самолечĕ Англин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕ çине вĕççе пынă. Противник самолечĕсем пăрахнă бомбăсем пысăк сиенех кŭреймен. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ те пысăк мар. Ирхине противникăн пĕр самолечĕ Англин хĕвелтухăç пайĕнчи пĕр хула çине темиçе бомба пырса пăрахнă. Бомбăсем кăшкăх сиен кŭнĕ. Вилнисемпе аманнисем пулман. Паян Лондонра самолетсенчен сыхланма 4 хутчен тревога паннă, мĕншĕн тесен Германи разведчикĕсем вĕççе пынă тата Лондонри пĕр район çине вут чĕртсе яракан бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем пысăк сиенех кŭреймен. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ те пысăк мар.

СТОКГОЛЬМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС) «Афтонбладет» хаçат çапла пĕлтерет: Англи авиацийĕ Нарвик çине, уйрăмăнах пристаньсем, чугунçул станцийĕ тата çар казармисем çине вăйлă бомбăсем пырса пăрахнă. Кăçалхи январь уйăхĕнче çак хула çине виççĕмĕш хут ĕнтĕ бомбăсем пырса пăрахнă.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Греци çарĕн верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер пысăк мар операцисем вăхăтĕнче противникăн çĕнĕ позицийĕсене туртса илнĕ. Итальянец сене 90 çынна яхăн тыткăна илнĕ, çавăн пекех тата автоматлă хĕçпăшалсем нумай туртса илнĕ. Çыранри пысăк çул çинче Италин мотомехчăçĕсем пуçланă атакăна сирсе янă. Противникăн 4 танкне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Итальянецсем 3 кун хушши ĕнтĕ наступлени сарса яма хăтланаççĕ, анчах та грексем пур çĕрте те хăйсен позицийĕсем çинчех тăраççĕ. Итали самолечĕсен 16—20-шер самолетлă соединенийĕсем, грексен коммуникацийĕсене татас тесе, вĕсен тылри позицийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Тепеленепе Валона хушшинче Англипе Греци самолечĕсем Итали коммуникацийĕсем çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Эльбасан çывăхĕнчи хăшпĕр объектсем çине те бомбăсем пырса пăрахнă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, грексем Итали войскисен контратакине сирсе янă, итальянецсене пысăк сухатусем кŭнĕ. Клисурăран çурçĕр енче пиллĕк кун хушши ĕнтĕ пысăк çапăçу пырать. Унта грексем çĕнĕ позицисене туртса илнĕ.

Италин Албанири войскисем валли подкрепленисене самолетсемпе илсе пыраççĕ, тесе пĕлтереççĕ.

Англи авиацийĕ Валона çине тата хуларан кăнтăр енче Италин моторизованнăй колоннисем çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă.

Çыранри секторта Шушика юханшывĕн айлăмĕпе малалла кайса пыракан грексем Гриба тăвĕсен çурçĕр-хĕвелтухăç сĕвекĕсем çинчи Важза ялне туртса илнĕ. Девол тата Шкумба юханшывĕсем тăрăх наступлени туса пыракан грексем Холт юханшывĕ патне пырса çитнĕ.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнче пысăк мар операцисем вăхăтĕнче противнике пысăк сухатусем кŭнĕ. Итальянецсем чылай сынна тыткăна илнĕ тата автоматлă хĕçпăшалсем туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци противникăн автоколоннисем, войскисем тата позицийĕсем çине хаяррăн пыра-пыра тапăннă.

Киренаикăра Дернăран хĕвелтухăç енче çапăçусем пыраççĕ. Итали войскисем противникăн пĕр колонни пуçланă атакăна сирсе янă. Чылай çынна тыткăна илнĕ. Итали самолечĕсем противник бронемашинисемпе пехоти çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Кени фронтĕнче, туземецсен войскисем противникăн малти позицийĕсене атакăланă. Противнике чылаях пысăк сухатусем кŭнĕ. Итали самолечĕсем противник грузовикĕсемпе бронемашинисем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Киренаикăра тата хĕвелтухăç Африкăра пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче Англин 4 самолетне персе антарнă.

Ыран январĕн 28-мĕш тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Катания çине (Сицилире) пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пысăк сиенех пулман. Противник самолечĕсем Неаполь çине пырса пăрахнă бомбăсем те пысăк сиенех кŭреймен. Вилнисемпе аманнисем çук.

Мацуока сăмахĕ

ТОКИО, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: январĕн 26-мĕшĕнче парламентăн ялти палатин ларăвĕнче ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мацуока сăмах тухса каланă. Çак сăмах, тет агентство, США государство секретарĕ Хэлл представительсен палатин ютçĕршыв комиссинче тунă заявлени çине панă ответ пулса тăрать.

Япония «Лăпкă океанăн пĕтĕм хĕвеланăç пайĕнче хăйне пуçпулса тăмалли позици туса хурасшăн» тесе каланă пирки, Мацуока çапла каланă: Хĕвеланăç полушаринче США влиянийĕ пуçпулса тăрать пулсан, Япония мирлĕ йĕркепех «аслă Хĕвелтухăç Азире чеканлĕ сферине» туса хурас шутпа тытса пыракан политикăна критиклени ăнланма çук. США ытти районсенчи, Хĕвелтухăç Ази пек районсенчи ĕçсене хутшăнмасăр тăни тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ, тенĕ Мацуока.

Япония США-па туслă отношенисем йĕркелесе яма тăрăшать, тесе паллă туса, Мацуока çапла каланă: «Америка, пирĕн оборонăн пĕрремĕш линийĕ Лăпкă океанăн хĕвелтухăç пайĕ мар, Китай пулса тăрать тесе шутлать пулсан, Японипе Америка хушшинче туслă отношенисем туса хума шутлани вăл усăсăр ĕмĕт кăна пулса тăрать».

Япония, тенĕ Мацуока, Лăпкă океанăн хĕвеланăç пайĕнче пуçпулса тăмалли позицине туса хурасшăн тесе, Англипе Америка Европăри вăрçа хутшăнса каяс пулсан, виççĕмĕш пункт ĕçе кĕрет, тесе шутлама пулать. Çакă вăл Япония пĕтсе ларассине е çĕнтерессине пĕлтернĕ пулĕччĕ, çавăнпа та ĕç çине тĕрĕс пăхни кирлĕ. Анчах пурте пĕлсе тăччăр. Япония хăй çине илнĕ обязательствăсене пăрахас çук.

Франции коммунистсен ĕçĕсем

БЕРЛИН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Паризер цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: Парижри следстви органĕсем 48 коммунист çинчен ĕçе суда панă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене листовкăсем сарнăшăн, теприсене коммунистла организацине явăштарма çынсем пухнăшăн айăплаççĕ. Арестленисенчен 13 çынни 18 çула та çитмен.

ВИШИ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Тан» хаçатăн январĕн 27-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Франции коммунистсен ĕçĕсем çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. «Компартине салатса янă пулсан та, — тесе çырать хаçат, —унăн пурлăхне конфискациленĕ, издательствине хупнă пулсан та, унăн пиншер активисчĕсене тĕрмесемпе концентрацилле лагерьсене хупса лартнă пулсан та, — компарти саланса кайман. Вăл хăйĕн кадрĕсемпе сыхăнса тăрассине сыхласа хăварнă. Хăйĕн ĕçне обстановкăна кура тĕлĕнмелле лайăх улăштарса, вăл халăхăн чи тĕрлĕ сийĕсем хушшинче хăйĕн ĕçне сарса пыма çĕнĕ формăсем тупнă. Полици коммунистсене пĕрмаях йĕрлет, кунсеренех коммунизмăн çĕнĕ вучахĕсене тупаççĕ, вĕсене пĕтереççĕ, анчах ку тĕлĕшпе татах та нумай ĕç тумаллаха».

Таипе Индо-Китай хушшинчи перемири

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Сайгони корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян вырăнти вăхăтпа 10 сехетре Таипе Франци Индо-Китайĕ хушшинчи вăрçă ĕçĕсем чарăннă.

Юнайтед пресс агентствин Бангкоки корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Таин верховнăй командованийĕ кăларнă коммюникере Таи войскисем вăрçă ĕçĕсене чарса лартни çинчен пĕлтернĕ

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Бангкокран пĕлтернĕ тăрăх çывăх вăхăтрах Токиора Таипе Франци Индо-Китайĕ хушшинче калаçусем пуçланассĕ.

ПОГРАНИЧНИК

Сăмах Семен Иванĕн. Музыки Ф. Лукинăн.



Хура пĕлĕт хупăрланă
Хĕвелтухăç чиккине.
Çивчĕ куçлă пограничник
Тинкерет Амур çине.

Кашни пĕчĕк сасă-чĕвĕ
Хăлхине унне кĕрет.
Ирĕн-каçăн пĕр ырмасăр
Тăшмана вăл тинкерет.

Аллинче çап-çут пăшал ун,
Вăл сыхлать тăван çĕрĕ.
Хĕрлĕ çăлтăрлă çĕршыв вăл
Чи хаклийĕ тĕнчере.

Çĕршыв шаннă ĕçшĕн хатĕр
Вăл халех пуçне хума.
Тем тусан та вăл каçармĕ
Чикĕ урлă тăшмана.

Ан ăмсан, тăшман, ан хапсăн
Пирĕн тулăх çĕрсене.
Ав, куратни, епле сыхă
Пограничник тăнине.

Аллинче çапçут пăшал ун,
Вăл сыхлать тăван çĕрĕ.
Сталин пурнакан çĕршыв вăл
Чи хаклийĕ тĕнчере.

„Илемлĕ литература“ альманахăн 2-мĕш кĕнеки

Çак кунсенче «Илемлĕ литература» альманахăн 2-мĕш кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Кĕнеке К. В. Иванов çинчен çырнă материалсемпе (тĕпчевлĕ статьясем, аса-илŭсем, К. В. Ивановăн халиччен ниçта та пичетленмен дневник сыпăкĕсем т. ыт. те) уçăлать.

Поэзи пайĕнче Аркадий Эсхель, Ухсай Яккăвĕ, А. Кăлган, А. Алга поэтсен сăввисем пур.

Теорипе критика пайĕнче И. Туктăн «К. В. Иванов творчествин тата чăваш фольклорĕ» ятлă статья, наукăпа тĕпчев пайĕнче Н. Андреевăн «Чĕлхе пулса кайни» ятлă статьясем пичетленнĕ.

Кĕнекере фольклор материалĕсем те пур.

Альманахăн ку кĕнеки уйрăмăнах учительсемпе вĕренекенсемшĕн питĕ те паха пособи пулать.

А.

Художество училищинче

Чăвашсен Государство художество училищинче вĕренекенсем хушшинче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту ăнăн сарăлса пырать. Халĕ пур классенче те вĕренекенсем конференци уçăлнă куна вĕренŭре пысăк ситĕнŭсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кашни вĕренекен «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренме, дисциплинăна çиçĕплетме тăрăшать.

Акă III-мĕш курсра вĕренекен Галина Новикова пур предметсемпе те «отлично» паллăсем илесситĕн тăрăшса вĕренет. Иванова юлташ конференци уçăлнă тĕле «Бал-маскарад» ятлă картина эскизне хатĕрлет. Вăл малтанхи ĕçсене хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Çавăн пекех Андреевпа Киселев (III-мĕш курс), Трофимов, Бибуков, Гурьев (IV-мĕш курс) студентсем те партконференци умĕнхи социализмлă ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем специальнăй тата общеобразовательнăй предметсемпе «отлично» паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ.

П. ЧИЧКАНОВ.

Практикăна кайрĕç

Учительсен квалификацине ŭстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтра хĕллехи экзаменсем пулса иртрĕç. Çакăн хыççăн унта вĕренекен студентсем Шупашкар хулинчи 1-мĕш, 6-мĕш тата 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулсене практикăна кайрĕç. Вĕсем практикăра тăрăшса ĕçлеççĕ.

О. Ярусов.

СУД

Колхоз тыррине çаратакансем

Чăваш АССР Верховный сучĕн уголовнăй ĕçсене пăхакан коллегийĕ январĕн 11—12-мĕшĕнче Улатăра кайса «Трудовик» колхозăн тыррине çаратса сутнă çынсен ĕçне пăхса тухнă. Суд составĕнче: председательĕ—Верховный Судăн членĕ Солагайкин, членĕсем — халăх заседателĕсем Максимовăпа Муравьева пулчĕç. Çавăн пекех ĕçе пăхнă çĕрте Чăваш АССР прокурорĕн помощникĕ Мурзин тата адвокатсем Эсенпа Ивакин пулнă.

Суд çакна палăртнă: 1940 çулта çуркунне Улатăр районĕнчи «Трудовик» колхоз хăйĕн ытлашши суртри вăрлăхне «Прогресс» колхоза кивçен панă, вăл тырра «Прогресс» колхозăн 1940 çулти кĕркунне каялла тавăрса памалла пулнă.

Çав тырăна каялла илсе ăна «Заготзерно» пунктне леçме «Трудовик» колхоз правленийĕ Николай Долгов завхоза тата Иван Елюковпа Иван Каулин колхозниксене янă пулнă. Долгов, Елюков тата Каулин «Прогресс» колхоза пынă та, хушнă ĕçе тŭрĕ кăмăлпа пурнăçлас вырăнне, «Прогресс» колхоз кладовщикĕсемпе Шкваринпа тата Макаровпа итем çинчен колхоз тыррине çаратма калаçса килĕшнĕ.

Вăрă-хурахсен ушкăнĕ хăйĕн ирсĕр шухăшне пурнăçлас май «Заготзерно» пунктне пĕр хут кайса тырă леçсе килнĕ хыççăнах Шкварин, Долгов, Елюков тата Каулин 38 михĕ çине 2419 килограмм çурхи тулă тултарнă та Улатăра Фомичев хваттерне илсе кайнă. Унта вĕсем Хохлов текенскерне 8 михĕ тырра 900 тенке сутнă. Елюков вăл укçана Шкварина панă.

Колхозран çаратнă тырра тупнă çинчен пĕлнĕ хыççăн, Шкварин хăйсен ирсĕр ĕçне шăлса лартма суя документсем тунă. Анчах ăна суд следстви тупса палăртнă.

Суд коллегийĕпе прокурор преступниксен пĕтĕм ирсĕр ĕçне тĕплĕн уçса панă, çакăн хыççăн вăрă-хурахсен ирĕксĕрех хăйсен айăпне йышăнмалла пулнă.

Колхоз тыррине çаратнă çынсен ушкăнне Долговпа Елюков организациленĕ. Вĕсем государствăна хирĕçле ĕçсем тунăшăн малтан та чылай вăхăт хушши тĕрмере ларнă пулнă.

Суд коллегийĕ Николай Долговпа Иван Елюкова, 1932 çулти августăн 7-мĕшĕнче кăларнă закон тăрăх айăпласа, иккĕшне те персе пăрахмалла тата вĕсен пурлăхне конфискацилемелле, В. Шкварина, А. Макарова тата И. Каулина кашнине 10 çуллăха хупса лартмалла, вĕсен пурлăхне конфискацилемелле тата ларса тухнă хыççăн 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармалла, Хохлова, уголовнăй кодексăн 164-мĕш статьин 1-мĕш пайĕпе айăпласа 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă.

Н. КУЗЬМИН.

Февралĕн 2-мĕшĕнче—комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать

Республикипе 3700 команда тунă

Комсомолăн республикăри организацийĕсем йĕлтĕрçĕсен Пĕтĕм Союзри кросне пысăк хастарлăхпа хатĕрленсе пыраççĕ. ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ çумĕнчи йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен оргкомитет пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн республикăра йĕлтĕрçĕсен командисем 3580 тата çуран командăсем 200 тунă. Комсомолецсем 1-мĕш сыпăклă ГТО значокĕн нормисене 7542 çын, иккĕмĕш сыпăклă ГТО значокĕн нормисене 20 çын тата БГТО нормисене 1346 çын панă.

Районсенче йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Комсомол пуçламĕш организацисенче пуринче те йĕлтĕрçĕсен кросне мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес майпа ирттернĕ смотр итогĕсене сŭтсе яваççĕ. Судьясен аппаратне çирĕплетнĕ тата кросс пулса иртмелли вырăнсене палăртса хунă. Комсомол пуçламĕш организацисем нумайĕшĕ кросра миçе çын пулмалли çинчен пĕлтерсе заявкăсем панă.

ЦК ВЛКСМ йышăннă тăрăх, кросс февралĕн 2-мĕшĕнче пуçланать. Йĕлтĕрçĕсен кросĕ ячĕпе физкультурниксем ятарласа вечерсем, катоксем çинче балмаскарадсем, спорт енĕпе массăллă ăмăртусем ирттереççĕ. Йĕлтĕрпе çŭресси çамрăксен юратакан спорт пулса тăчĕ.

«Восход», «Строитель» тата ытти спорт обществисем те комсомол пуçламĕш организацисене лайăх йĕлтĕрçĕсене ярса, йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерме хатĕрленес ĕçре пулăшрĕç. Вĕсен чаплă пуçарăвĕ пысăк пулăшу пачĕ.

Д. Пароятников.
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Пĕрремĕш выран йышăнакан района—хĕрлĕ ялав

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ тата физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ сумĕнчи комитечĕ комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă района пама куçса çŭрекен хĕрлĕ ялав тунă.

Кросра лайăх тĕслĕхсем кăтартнă комсомол организацисене, комсомол пуçламĕш организацисен секретарĕсене, физкультура коллективĕсен председателĕсене, командăсемпе командирĕсене т. ыт. ВЛКСМ Чăваш Обкомĕпе республикăри физкультура комитечĕн хисеплĕ грамотисене парса наградăлаççĕ.

—o—

Ялти магазинсен хисепĕ ŭссе пырать

ЛЬВОВ. 1940 çулта Львов облаçĕнчи ялсенче 587 кооператив, 1.819 магазин организациленĕ. Кăçалхи çул ялти магазинсен хисепĕ татах та ŭсет. Районсенче 21 магазин, ялсенче 116 магазин, краççин склачĕсемпе ытти тĕрлĕ складсем тăваççĕ.

ТŬРЛЕТНИ

«1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче участникĕсене наградăлани» ятлă заметкăра («Чăваш Коммуни», январĕн 26-мĕш) Çĕрпŭ районĕнчи Анатри Кипекçе ялсоветне кĕрекен колхоз ятне «Совет» колхоз тесе тĕрĕс мар пичетленĕ. Ăна «Емĕт» колхоз, тесе тŭрлетсе вуламалла.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

ЧЕБОКСАРСКОМУ
ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
ТРЕБУЮТСЯ
ПЛОТНИКИ
на постройку коровника и свинарника.
Оплата сдельная. Предоставляется общежитие.
Дирекция.
3—1

ВСЕ МАГАЗИНЫ
ГОРПО, СПО И ЛАРЬКИ,
торгующие водкой и ликерно-водочными изделиями,
ОБЯЗАНЫ ПРИНИМАТЬ
в неограниченном количестве
за наличный расчет
ПОСУДУ из под изделий Главликероводки,
независимо покупается водка или нет, а также
ОБЯЗАНЫ ОТПУСКАТЬ ВОДКУ БЕЗ ВОЗВРАТА ПОСУДЫ.
Все случаи отказа в приеме годной винной посуды „Главликероводки“, а также отказа отпуска водки без посуды записывайте в жалобную книгу магазина или сообщайте ЧЕБОКСАРСКОМУ ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ.
РАБОТНИКИ ПРИЛАВКА!
Упростите технику приема и оплаты посуды, содействуйте увеличению возврата посуды населением.
За принятую посуду работникам прилавка выплачивается премия в сумме 12 копеек с декалитра.
АДМИНИСТРАЦИЯ.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Еçхĕрăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» жур-налăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

2252.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.